**А.А. Ядрицова, И.В. Ядранская, Р.А. Мазикова, М.Г. Михуткина**

# ЧĂВАШ
# ЛИТЕРАТУРИ

**Вырăс шкулĕн**

**6-мĕш класĕ валли**

# Йышăннă паллăсем:

 — хăвăра тĕрĕслĕр (проверьте себя)

 — ыйтусемпе ĕçсем (вопросы и задания)

 — кăткăс ыйтусемпе ĕçсем (вопросы и задания повышенной сложности)

 — итлев-тăнлав (фонохрестоматия)

 — илемлĕ вулама хăнăхатпăр (учимся читать выразительно)

 — литература теорийĕ (теория литературы)

 — ÿнер тата сăмах тĕнчи (изобразительное искусство и литература)

 — культурăсен çыхăнăвĕ (диалог культур)

 — пултарулăх ĕçĕ (е проект) (творческое задание (или проект))

 — словарь ĕçĕ (словарная работа)

 — халăх ăс-хакăлĕ (народная мудрость)

Чăваш литератури: Вĕренÿпе вулав кĕнеки. 6-мĕш класс валли / А.А. Ядрицова, И.В. Ядранская, Р.А. Мазикова, М.Г. Михуткина çырса-пухса хатĕрленĕ. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2019. — … с.

Вĕренÿпе кĕнекине пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вĕренÿ организацийĕсенче усă курма Федерацин патшалăх вĕренÿ стандарчĕпе килĕшÿллĕн хатĕрленĕ.

# ХАЛĂХ СĂМАХЛĂХĔ — УСТНОЕ НАРОДНОЕ ТВОРЧЕСТВО

## ТУПМАЛЛИ (СУТМАЛЛИ) ЮМАХСЕМ — ЗАГАДКИ

Тупмалли юмах çинчен чăвашсем: «Юмах ярăп, юптарăп, йăнăш çулпа чуптарăп», — тенĕ. Кунта ыйтăвăн тупсăмне тӳрех уçса памаççĕ, ытарлă калаççĕ. Тупмалли юмахра сăмахсем, юрăри пекех, çыпăçуллă, илĕртӳллĕ илтĕнеççĕ.

**Загадка** – это краткое иносказательное описание какого-либо предмета или явления, которое надо узнать, разгадать.

**Тупмалли юмах** тесе çут çанталăкăн тĕрлĕ пулăмĕсене, йăлари ĕç-хĕле, таврари урăх япаласемпе пулăмсене тулашри е ытти паллисем урлă ятарлă сăнланине калаççĕ.

Тупмалли юмах чăваш хушшинче тĕрлĕрен ятпа çӳрет: сутмалли юмах, кĕске юмах, тупмалли юмах. «Сутмалли юмах» тени сутмалла вылянă вăйăран тухса кайнă. Тупмалли юмахсене чăвашсем ытларах выртмара, арманта, чăпта çапнă çĕрте тата ытти ĕçре ыйхă пусасран каланă. Улахсенче шӳтлесе «сутмалла» вылянă. Вĕсене çавăн пекех каçсерен, ашшĕ-амăшĕ ĕçрен пушă вăхăтра, ачи-пăчине тавçăрулăха вĕрентес тĕллевпе каланă. Çапла майпа ватăрах çынсем çамрăксене пĕлӳ панă, харпăр хăй таврашĕнчи япалан илемлĕхне курма вĕрентсе пынă.

### Тырă-пулла, пахча-çимĕçе сăнлакан тупмалли юмахсем

Пĕр сăпкараултă ача *(пăрçа)*.
Вĕтĕр-вĕтĕр вĕтĕрти, йĕри-тавра шерепи *(сĕлĕ)*.
Пĕчĕк кăна аппа пур, куçран пăхсан макăртать *(сухан)*.
Пĕчĕк çеç кинĕм пур, пин хут кĕпе тăхăнать *(купăста)*.
Хăй çаврака — уйăх мар, хӳреллĕ — шăши мар, ешĕл — вăрман мар *(çарăк)*.
Чăп-чăмăркка, чăмăркка, турат çинче йăлтăркка *(чие, панулми)*.

### Çут çанталăк пулăмĕсене сăнлакан тупмалли юмахсем

Пĕлĕт çинче илемлĕ хĕр çӳрет *(хĕвел)*.
Алăсăр, урасăр — алăк уçать *(çил)*.
Мана пурте кĕтеççĕ — эпĕ тухатăп та, тарса пытанаççĕ *(çумăр)*.
Çеçен хир варринче вагă юман, ватă юманăн вун икĕ турат, вун икĕ туратра тăватшар йăва, тăватшар йăвара çичшер çăмарта *(Çулталăк: уйăх, çулталăк вăхăчĕсем, эрне, кун)*.

Юхать, юхать — юхса пĕтеймест, чупать, чупать — чупса çитеймест *(юхан шыв)*.
Атăл урлă вĕрен ывăтса каçартăм *(асамат кĕперĕ)*.

## Словарь ĕçĕ

**Пăрçа** — горох
**Сĕлĕ** — овес
**Ешĕл** — зеленый
**Асамат кĕперĕ** — радуга
**Кин** — сноха, невестка
**Чăмăр** — круглый

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Мĕн вăл тупмалли юмах?
2. Тупмалли юмахра сăмахсем мĕнлерех илтĕнеççĕ?
3. Чăвашсем тупмалли юмахсене ытларах ăçта-ăçта каланă?
4. Мĕншĕн тупмалли юмаха «сутмалли юмах» тесе те калаççĕ?
5. Ватăрах çынсем çамрăксене мĕнлерех майпа тупмалли юмахсем урлă пĕлӳ панă?
6. Панă тупмалли юмахсен тупсăмĕсем хăшĕсем чĕрĕ мар çут çанталăк шутне кĕреççĕ-ши?
7. Чĕрĕ çут çанталăка мĕн-мĕн кĕрет? Унпа çыхăннă пĕр тупмалли юмах шухăшласа тупăр. Тупмалли юмах тупсамĕпе синквейн çырăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Хăвăр пĕлекен ытти тупмалли юмахсене аса илĕр. Вĕсен тупсăмĕнчи япаласем чĕрĕ çут çанталăк шутне-и е чĕрĕ мар çут çанталăк шутне кĕреççĕ-и? Ăнлантарăр.

## Пултарулăх ĕçĕ

*Панă ĕçсенчен пĕрне суйласа илĕр:*

1. Пĕр-пĕр пахча-çимĕç е çут çанталăк пулăмĕ çинчен калакан тупмалли юмахсем йĕркелĕр, тупсăмĕсене юлташусене туптарăр.
2. Пĕр тупмалли юмахпа сюжетлă ӳкерчĕк тăвăр.
3. Тупмалли юмахсен тупсăмĕсемпе кроссворд тăвăр.

# ПĔЛĔВЕ СУТĂН ИЛЕЙМĔН — ЗНАНИЕ ЗА ДЕНЬГИ НЕ КУПИШЬ

## Геннадий Юмарт
## (1938)



***Геннадий Юмарт (Геннадий Федорович Трофимов)*** *— сăвăçă, тăлмач, фольклор пухакан, текстолог. 6 томран тăракан чăваш фольклор пуххин тата темиçе чăваш илемлĕ литература кăларăмĕн редакторĕ. Вырăс, украина, венгр, болгар, латыш, польша, тутар тата ытти халăх сăвăçисен сăввисене чăвашла куçарнă. Унăн «Халăх сăмахлăхĕ», «Халăх эпосĕ», «Истори халапĕсем», «Асаттесем» тата «Манăн Бичурин» ятлă сăвă кĕнекисем пичетленсе тухнă. Сăвăçă А. Пушкин юмахĕсене те чăвашла куçарнă.*

*«Пирĕн чĕлхе, пирĕн истори, халăх культури питĕ пуян. Çавна ытларах ăша хывма тăрăшăр. Çакă сире пурнăçра хăват, хăюлăх парса тăтăр», — тет Г. Юмарт хăйĕн вулаканĕсене.*

## ТАВТАПУÇ САНА, УЧИТЕЛЬ

Тăрăшса ăс-тăн паратăн
кунсерен,
Кашнине ыр пурнăç çулĕ
парнелен.

Çавăнпа кун-çул илемлĕ,
Çавăнпа эпир телейлĕ, —
Тавтапуç сана, учитель,
чĕререн.

Ăшă кăмăллă, сăпайлă
пулнăран,
Эс атте-анне пек çывăх
туйăнан.

Эс ĕçре хастар пулмашкăн
вăй кĕртен,
Çĕршыва чунтан савма та
вĕрентен.

Çавăнпа кун-çул илемлĕ,
Çавăнпа эпир телейлĕ, —
Манас çук сана, учитель,
нихăçан.

*Г. Юмарт*

### Словарь ĕçĕ

**Ыр пурнăç çулĕ** — дорога добра
**Хастар** — активный, инициативный
**Нихăçан** — никогда
**Вăй кĕрет** —сил становится больше
**Ăшă кăмăллă** — душевный
**Кун-çул** — жизнь
**Сав** — любить
**Сăпайлă** — скромный, воспитанный

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Автор шучĕпе кун-çул илемĕ мĕнре?
2. Сăвăра вĕрентекен çинчен мĕнле ăшă сăмахсем каланă? Тупса вулăр.

3. Вĕрентекене кампа танлаштарнă? Мĕншĕн?
4. Санăн юратнă вĕрентекенӳ пур-и? Вăл мĕн ятлă?
5. Пирĕн республикăра вĕрентекенсене ăçта хатĕрлеççĕ?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Мĕнле шутлатăр: вĕрентекен профессийĕнче мĕнле-мĕнле специальноçсем пур?

## Итлев-тăнлав

Г. Юмарт çырнă «Тавтапуç сана, учитель» сăвă сăмахĕсемпе А. Романов тата М. Ягунов композиторсем юрă хывнă. Юрра итлесе пăхăр та юрлама вĕренĕр.

## Культурăсен çыхăнăвĕ

Вырăс, мари, тутар е ытти халăхсен çыравçисем вĕрентекен çинчен мĕнле сăвăсем çырнă? Интернет уçлăхĕнчен информаци шыраса тупăр, класра пĕр-пĕрне каласа парăр.



## Пултарулăх ĕçĕ

*Николай Овчинниковăн «И.Н.Ульянов тата И.Я. Яковлев чăваш шкулĕнче» картинипе паллашăр, ыйтусене хуравлăр.*

1. Картина авторĕ кам?
2. Ялти шкула чăваш ачисем патне кам-кам килнĕ?
3. Ачасем вĕсене мĕн каласа параççĕ?
4. Эсир И.Н. Ульянов çинчен мĕн илтнĕ?
5. И.Я. Яковлев çинчен мĕн пĕлетĕр?

*Ваттисен сăмахĕсен пуçламăш пайне тупса палăртăр:*

………. çăкăр ыйтмасть.
………, ватăлла вĕренни — юр çинче.
………. пĕлменнинчен лайăхрах.
………. — ĕмĕр вĕрен.

**Константин Беляев**
**(1910-1964)**



***Константин Иванович Беляев*** *— мари халăхĕн çыравçи. Аслă Аттелĕх вăрçи вăхăтĕнче автор питĕ тухăçлă ĕçленĕ, вăрçă ахрăмĕ çинчен калавсемпе сăвăсем çырнă, пьесăсем хайланă. Чи пĕрремĕш очеркĕсене 1927 çулта «Кыралшы» хаçатра пичетленĕ. Константин Беляев И. Крылов, А. Пушкин, М. Лермонтов, Н. Некрасов, Л. Толстой произведенийĕсене мари чĕлхине куçарнă, юрă-кĕвĕсем пуçтарнă, талантлă композитор пулнă. Хайлавĕсенче пурнăçри чăн пулнă самантсене çырса кăтартнă, ачасене тăван çĕре, тăван халăха юратма вĕрентнĕ.*

## ЧИ ХАКЛĂ ПАРНЕ

*Калав*

Сентябрĕн пĕрремĕшĕ. Шкул ачисемшĕн çак кун чăн-чăн уяв. Паян ирех ура çинче вĕсем. Портфелĕсене кĕнекесемпе тетрачĕсене, ручкăпа кăранташа чиксе хучĕç. Шкула кайма вăхăт çитессе питĕ кĕтеççĕ. Хăйсен вĕрентекенне чечек çыххи парнелемелли çинчен те манман.

Çак кун ирхине урама тухатăн та тĕлĕнсе пăхса тăратăн вара — ял тăрăх хитре тумланнă шкул ачисем утаççĕ. Кашнийĕнех пĕр аллинче — портфель, тепринче — чечек çыххи.

Соня та урама васкаса тухрĕ. Ун аллинче чечек çыххи çук. Хăйĕнпе пĕр класра вĕренекен хĕр тантăшĕ патне хашка-хашка чупса çитрĕ.

— Аня, эпĕ сирĕн пахчари пĕр виç чечеке татам-и? — ыйтрĕ Соня. — Хамăрăнне качакасем веçех çисе янă.

— Начаррисем çеç юлнă унта, — кăмăлсăрланчĕ Аня. — Лайăххисене хам татрăм. Пăх-ха, ман чечек çыххи чи хитри вĕт? Çакăн пекки шкулта никамăн та пулас çук. Ларса юлнисенчен илемлĕ чечек çыххи пулмасть. Ку чечек çыххине иксĕмĕр ятпа парнелĕпĕр — манран та, санран та. Килĕшетĕн-и?

Соня пĕр сăмахсăрах пуçне сĕлтрĕ.

Шкула ачасем пурте чечекпе килнĕ. Пĕтĕм класс Аня аллинчи чечек çыххи çине пăхать. Чăнахах та, чи хитри Аньăн. Пĕр Соньăн çеç чечек çук — начарри те, хитри те. «Юрать-ха, — шухăшларĕ хăй ăшĕнче Соня, — Аня чечек çыххине иккĕшĕн ячĕпе пама пулчĕ».

Шăнкăрав янăраса кайрĕ. Класа учительница кĕчĕ. Ачасене вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа саламларĕ. Вĕренекенсем ăна чечек çыххисем парнелерĕç. Учительница вĕсене кăмăллăн йышăнчĕ, сĕтел, чӳрече янаххисем çине хурса тухрĕ. Аня та пачĕ хăй чечекĕсене, анчах Соньăпа иккĕшĕн ячĕпе тесе шарламарĕ. Манса кайнă пулмалла. Соня куçĕнчен кĕçех куççуль шăпăртатсах юхса анчĕ. Учительница çакна асăрхарĕ те çавăнтах хĕр ача патне утса пычĕ.

— Мĕншĕн макăртăн-ха, Соня?

— Чечексĕр килнĕшĕн макăрать, — ăнлантарчĕ Аня. — Качакисем пахчари чечекĕсене пĕтĕмпех çисе янă.

— Макăрмалла мар уншăнах, — кулса ячĕ учительница. Соня патне пычĕ те пĕшкĕнсе хăлхинчен тем каларĕ. Хĕр ача макăрма чарăнчĕ, йăл кулса илчĕ. Урок хăй йĕркипе пычĕ. Учительница Соньăна мĕн каланине ыйтма пĕри те тавçăраймарĕ, манса кайрĕç пулас.

Пĕр уйăх иртсе кайрĕ. Соня «пиллĕк» паллăсемпе кăна вĕренет. Класра пурте тĕлĕнеççĕ: ара, иртнĕ çул вăл лайăх та, начар та вĕренместчĕ. Халь вĕренӳре пуринчен те иртсе кайрĕ. Мĕнле пулчĕ-ха ку?

Аня сентябрĕн пĕрремĕшне аса илчĕ.

— Соня мĕншĕн лайăх вĕреннине пĕлетĕп эпĕ, — терĕ вăл.

— Мĕншĕн? Мĕншĕн? – пуçларĕç ыйтма ачасем пĕрин хыççăн тепри.

— Астăватăр-и ун чухне учительница Соньăна хăлхаран тем каланине? Астăватăр-и ун чухн Соня мĕнле савăннине? Çав сăмаха пĕлнĕ пулсан эпĕ те «пиллĕк» паллăпа кăна вĕреннĕ пулăттăм.

Учительница Аня сăмахĕсене илтрĕ те çапла каласа хучĕ:

— Эпĕ Соньăна ун чухне: «Эсир лайăх вĕренни — маншăн чи хаклă парне», — терĕм. Соня лайăх вĕренет, çакă маншăн хаклă парне.

*К. Беляев*

## Словарь ĕçĕ

**Хашка–хашка** — запыхтевшись
**Чечек çыххи** — букет цветов
**Куççуль шăпăртатсах юхса анчĕ** — слезы потекли ручьём
**Тавçăр** — догадаться
**Тантăш** — ровесник
**Хаклă парне** — дорогой подарок
**Начар** — плохо

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Шкул ачисем ăçта кайма хатĕрленеççĕ?
2. Вĕсен аллисенче мĕнсем?
3. Соньăн мĕнле инкек сиксе тухнă?
4. Аня Соньăна мĕнпе пулăшма шантарать? Аньăн шухăшне çирĕплетекен сăмахсене текстра тупса вулăр.
5. Аня чечек çыххине Соньăпа иккĕшĕн ячĕпе парать-и? Мĕншĕн? Вăл хăй мĕн каланине манса кайнă-ши?
6. Калав вĕçне тепĕр хут вулăр. Хĕр ачасен сăн-питне, кăмăлне сăнлăр.

7. Соня мĕншĕн лайăхрах вĕренме тытăнать?
8. Эсир учительница каланине мĕнле ăнланатăр?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Мĕнле шутлатăр: вĕрентекеншĕн чи пысăк парне мĕн пулма пултарать?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Чăвашла тата вырăсла ваттисен сăмахĕсен тӳр килĕвĕсене тупăр. Хăвăра килĕшекен висĕ ваттисен сăмахне пăхмасăр калама вĕренĕр.*

1. Ăс-тăна мĕн виличчен пухас пулать.
2. Ĕçпе вĕренӳ юнашар пыраççĕ.
3. Пĕлĕве сутăн илеймĕн.
4. Ача чух вĕренни ĕмĕрлĕх.
5. Вĕрентекен пур чухне вĕренсе юл.

1. Знание за деньги не купишь.
2. Труд и ученье — всегда рядом.
3. Пока есть учитель — учись.
4. Жить да быть — ума копить.
5. Ученье в молодости — на всю жизнь.



*Алексей Кокель «Ликбез»*

## Пултарулăх ĕçĕ

1. *Алексей Кокелĕн картинипе паллашăр, ыйтусене хуравлăр.*

1) Картина мĕн ятлă? Унăн авторĕ кам?
2) Çынсем ăçта лараççĕ? Вĕсем унта мĕн тума пуçтарăннă?
3) Варринче кама куратăр?
4) Вĕрентекен çынсене мĕн тума вĕрентет?
5) Сирĕн шутпа ку çынсем вулама, çырма пĕлеççĕ-ши?

2. *А. Кокель çинчен Интернетран информаци шыраса тупăр, каласа пама хатĕрленĕр.*

# КĔРХИ ÇАНТАЛĂКĂН КĂМĂЛĔ ХУÇĂК — ОСЕНЬ – ПОГОДЫ ПЕРЕМЕН ВОСЕМЬ

## Марфа Трубина
## (1888-1956)



***Марфа Дмитриевна Трубина*** *– ача-пăча литературин никĕсне хываканĕ тата аталантараканĕ. Вăл Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă, чăвашсене çутта кăлараканĕн И.Я. Яковлевăн вĕренекенĕ пулнă. Хăй вĕрентекен пулнă май произведенийĕсемпе те пĕрмай ачасене вĕрентес, пĕлӳ парас тесе тăрăшнă. Унăн паллăрах произведенийĕсем: «Ача чухнехи», «Мучар», «Асăнмалăх, савăнмалăх», «Хӳтĕ вырăнта» повеçсем, «Хĕллехи каçсенче» калав, «Çăлтăрсем», «Чухăн çын» сăвăсем.*

## ЫЛТĂН КĔРКУННЕ
*Калав*

Çу иртсе те кайрĕ. Шăрăх кунсенче шыва кĕме çӳресси, вăрмана çырла татма каясси, çаранта вылясси халĕ çук. Кĕр çывхарнă май ачасен кăмăлĕ шкулалла туртăнать. Борис кăçал тăваттăмĕш класра вĕренме тытăнать ĕнтĕ.

…Пĕр канмалли ăшă хĕвеллĕ кун Борис вăрмана кайрĕ. Унта вăл ӳсен-тăрансен вăррисене коллекци валли пухрĕ, мăйăр татрĕ, вĕсене хăй умĕнче çакăнса тăракан пĕчĕк пĕрнине тултарчĕ. Пĕрнере Борисăн виçĕ пысăк панулми выртать. Вĕсене амăшĕ ăна шыв ĕçес килсен çиме парса янă.

Борис малтан вăрманăн çӳллĕ енĕпе çӳрерĕ. Кунта шултра йывăççем: юман, çăка, ăвăс. Сайра хутра хăркаласа ларнă улмуççисем курăнкалаççĕ. Пĕр улмуççи, çурри хăрнăскер, симĕс туратне кăнтарса ларать. Борис çав турат çинчи виçĕ пĕчĕк улма пĕр çĕре чăмăртанса ларнине курах кайрĕ. Вĕсене вăл татса илчĕ. Иккĕшне пĕрнине ячĕ, виççĕмĕшне, кĕпи çумне кăшт-кашт сăтăркаласа, çăварне хыпрĕ, чăмлама тытăнчĕ. Çăварне хаяршак тутă çапрĕ, шăла тиврĕ. Ача çыртнă улмана, çăвартан кăларса, шĕшкĕ тĕмĕ урлă пăнлаттарчĕ. Пĕрнере выртакан уй улмисене те çĕре илсе пăрахрĕ.

Борис мăйăр шыраса аяларах анчĕ. Кунта хăрнă улмуççисем, тункатасем ытларах. Улмуççисен тĕпĕнчен те, тункатасем çинче те хунавсем шăтса тухнă, турачĕсене саркаласа лараççĕ. Иртсе пынă чух улмуççи Бориса кĕпи аркинчен çаклатрĕ, çурса ячĕ.

— Ах, — терĕ Борис, айккинелле çаврăнса, — халĕ япала çуратăн, ӳссессĕн — йӳçĕ улма ӳстеретĕн, ырă йывăç мар эсĕ.

«Ырă мар» йывăç ларса юлчĕ. Борис улмуççисем хушшипе каякан кукăр-макăр сукмакпа утрĕ.

*М. Трубина*

## Словарь ĕçĕ

**Ӳсен-тăран вăрри** — семена растений

**Кăшт-кашт сăтăркаласа** — слегка протирая

**Хаяршак** — кислый, горьковатый вкус

**Çакăнса тăракан пĕрне** — висячий кузовок, корзина

**Кукăр–макăр сукмак** — извилистая тропинка

**Кĕпе аркинчен çаклат** — зацепить подол рубахи

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Кĕркунне еннелле çанталăк еплерех улшăннă?
2. Канмалли кун çанталăк мĕнле тăнă?
3. Борис вăрманта мĕн сăнанă?
4. Вăл çиме тăнă улмасем мĕншĕн йӳçек тутăллă пулнă?
5. Борис вăрман улмуççине мĕншĕн «ырă мар» йывăç тет?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Правилăна малалла тăсăр.*

**Рассказ** – это **... .**
**Калав** тесе … .

Борис шĕшкĕлĕхе кĕчĕ. Вăл пĕр тĕм айне ларчĕ. Кунта сап-сарă хĕвел ӳкет: ăшă, çутă, типĕ — ларма питĕ аван. Каннă хушăра Борис улма çиме шутларĕ. Уй улми çыртнăран çăварта халĕ те тăкăскă, унăн йӳççи пур пек туйăнать. Борис пĕр улмине пĕрнерен илчĕ. Улма илемлĕ пулнипе, унăн шăршипе савăнса, ача улмана çавăркаласа пăхкаларĕ. Улма витĕр курăнас пек сарă, хăй йывăр, йĕкĕр чăмăртан та пысăк. Ай, ытарма çук! Борис улмана, çыртса илес тесе, тути патне илсе пынăччĕ, хыçалтан чаштăртаттарни илтĕнчĕ. Ача çаврăнса пăхрĕ. Кĕтмен çĕртен лапсăркка шĕшкĕ хушшинчен Варуçăн сарă пуçĕ курăнса кайрĕ. Çавăнтах, тепĕр шĕшкĕ тĕмне сирсе, Валя тухрĕ. Унăн аллинче пĕчĕк симĕс витре, кăвак пумаçи кĕпе аркине куршанкăсем çакланнă.

Борис хĕр ачасене хăй патне ларма сĕнчĕ.

Валя, витрине сарăхнă курăк çине лартса, Бориспа юнашар ларчĕ. Варуç вĕсен умне чĕркуçленчĕ.

— Мĕн пухрăн эсĕ Борис? — ыйтрĕ Варуç, кăвак куçĕсемпе Борисăн пĕрни еннелле пăхса.

— Коллекци валли курăк вăррисем. Эсир хăвăр мĕн пухрăр?

— Эпир те çавсенех. Валя тата уй улми тупрĕ.

Валя витрине хăй патне çывхартрĕ те, аллипе витре ăшĕнче сиркелесе, виçĕ улма илчĕ.

— Ме, Борис, улма, — сĕнчĕ Валя. — Эпир Варуçпа çирĕмĕр.

— Эпĕ те тупса çисе пăхрăм, питĕ йӳçĕ. Силле, Валя, улмусене çĕре, кулса илчĕ Борис. — Акă, ме тутлă улма!

Борис хăйĕн панулмине Вальăна çӳлелле ывăтса пачĕ.

— Ме! Варуç, тыт! — Ăна та пĕрнерен улма илсе пачĕ Борис.

— Ах! Мĕнле улма ку?! — савăнчĕ хĕр ача. — Çиме те шел!

Юлташĕсем савăннине кура, Борис хăй те, кăмăллă кулкаласа, улмине çиме тытăнчĕ.

— Мĕншĕн вăрманти улмуççи çинче тутлă улма ӳсмест-ши? — тесе, Валя тутине çулакаласа илет.

Борис кулкаласа ларать.

— Х-ха, мĕншĕнне пĕлместĕн-и эсĕ? Сыпас пулать вĕсене. Ахалех тутлă улма çиме пулать тетĕн-и?

— Ой, сыпсан тем пек ырă пулĕччĕ, — савăнчĕ Варуç.

— Чăнах та, айтăр сыпса тухар! — хавхаланчĕ Борис. — Çак вăрмана килекен кашни çын йӳçĕ те вĕтĕ улма вырăнне шултра та тутлă улма татса çитĕр!

— Айтăр! Айтăр! — терĕç Варуçпа Валя пĕр харăс.

*М. Трубина*

## Словарь ĕçĕ

**Сыпас пулать** — надо привить
**Куршанкă** — репейник
**Чаштăртаттар** — шуршать
**Харăс** — одновременно, все сразу

**Пумаçи кĕпе** — рубашка из бумазеи (вид материала)
**Йĕкĕр чăмăр** — пара кулаков
**Тăкăскă** — кислый, терпкий, вяжущий
**Силле** — трясти

**Персонаж** – субъект действия, переживания, высказывания в произведении, а также носитель точки зрения на действительность и других персонажей**.**

**Персонаж** – литература хайлавĕнчи геройăн пĕтĕмĕшле ячĕ.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Калавра мĕнле персонажсем тĕл пулчĕç? Вĕсен ячĕсене каласа тухăр.
2. Борис шĕшкĕлĕхре камсене тĕл пулнă?
3. Хĕр ачасем вăрманта мĕн пухнă?
4. Вĕсене Борис мĕнпе хăналанă?
5. Борис улмисем ăçта ӳснĕскерсем пулнă?
6. Ачасем мĕнле ырă ĕç тума шут тытнă?
7. Эсĕ улмуççи сыпнине курнă-и?
8. Сана Бориспа юлташĕсем килĕшрĕç-и? Мĕншĕн?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене чăвашла куçарăр е тӳр килекен чăвашла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

Яблоко от яблони далеко не падает.

Лес — половина тулупа.
Срубил одно дерево — посади десять.
Всему свое время.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Марфа Трубина камăн вĕренекенĕ пулнă?

## Пултарулăх ĕçĕ

*1. Моисей Спиридоновăн «Улмуççи чечекре» картинипе паллашăр, ыйтусене хуравлăр.*



*Моисей Спиридонов «Улмуççи чечекре»*

1) Картинăра мĕн куратăр?
2) Художник картинăра çулталăкăн хăш вăхăтне кăтартнă?
3) Улмуççи хăш уйăхра чечеке ларать?
4) Çуркуннене сăнлама художник мĕнле тĕссемпе усă курнă?
5) Сирĕн пахчара (дачăра) улмуççин хăш сорчĕсем ӳсеççĕ?
6) Картинăпа калавра мĕнле пĕрпеклĕхсем тата уйрăмлăхсем куратăр?

## Пултарулăх ĕçĕ

*Интернет усăлăхĕнчен М. Спиридонов çинчен информаци тупăр, каласа пама хатĕрленĕр.*



### Николай Мартынов
### (1933-2000)

***Николай Антонович Мартынов (Антонов)*** *– чăвашсен паллă çыравçи, проза ăсти. Ăна çут çанталăк теми питĕ çывăх пулнă. Чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕк тĕнчи, вĕсен çут çанталăкри вырăнĕ шухăшлаттарнă, хумхантарнă çыравçа. Çавăн пекех вăл*

*чылай хайлавӗнче этемпе чӗр чун хушшинчи пулӑмсене анлӑн ҫутатса панӑ, пур чӗрӗ чунӑн та тӗнчере хӑйӗн вырӑнӗ, шӑпи пулнине палӑртнӑ. Паллӑ произведенийӗсем: «Этем телейӗ», «Урпашра та вут чул пур», «Икӗ ҫӳлевӗҫ вилӗмӗ», «Пӑши мӑйраки», «Вӑрманти тӗлпулу» тата ыт. те. Н. Мартынов поэзи хумӗнче те тӑрӑшнӑ, ытларах пейзаж лирикине кӑмӑлланӑ.*

## КӖРХИ ӲКЕРЧӖК



Кӑмпа шӑршиллӗ вӑрманта
Пакша ырми-канми ӗҫлет,
Сар мӑйӑр, сар йӗкел унта
Ҫӑва тухмалӑх хатӗрлет.

Шӗвӗр сӑмса – улатакка
Так-так! Шаккать хыр вуллине.
Тӗлӗнтерет ку чакака –
Кӑлт-калт ҫӗклет вӑл хӳрине.

Хура пуҫне силле-силле
Чакӑлтатса ларсан-ларсан,
Кӗрхи пуян ял еннелле
Вӗҫет вӑл нӳрӗк вӑрмантан.

*Н. Мартынов*

### Словарь ӗҫӗ

**Ырми-канми ӗҫлет** — работает без устали, не зная усталости
**Вулӑ** — ствол
**Ҫӑва тухмалӑх** — чтобы хватило до лета
**Йӗкел** — желудь
**Нӳрӗк** — влага, сырость

### Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Пакша хӗл касма мӗн-мӗн хатӗрлет?
2. Сӑвӑра мӗнле кайӑк ячӗсем тӗл пулаҫҫӗ? Эсир вӗсем ҫинчен мӗн пӗлетӗр? Сӑвӑҫ мӗн ҫырать?
3. Вӑрманта пурӑнакан чӗр чунсене хӗлле уйрӑмах йывӑр. Упа, чӗрӗп ӑҫта хӗл каҫаҫҫӗ? Мӗнпе тӑранса пурӑнаҫҫӗ-ши вӗсем?
4. Ӳкерчӗкпе тӳр килекен сӑвӑ йӗркисене тупса вулӑр.
5. *«Кӗрхи пуян ял»* тенине эсир мӗнле ӑнланатӑр? Мӗншӗн чакак вӑрмантан *«кӗрхи пуян ял еннелле»* вӗҫет?
6. Сӑвӑра евӗрлев сӑмахӗсене (подражательные слова) тупӑр. Автор вӗсене мӗн тӗллевпе усӑ курнӑ-ши? Эсир мӗнле евӗрлев сӑмахӗсем пӗлетӗр? Ҫут ҫанталӑкпа ҫыхӑннӑ 5 евӗрлев сӑмахӗ тупса ҫырӑр.

### Халӑх ӑс-хакӑлӗ

*Сӑввӑн тӗп шухӑшӗпе тӳр килекен ваттисен сӑмахӗсене палӑртӑр:*

1. Уй куçлă, вăрман хăлхаллă.
2. Кĕр мăнтăр, çур ырхан.
3. Кĕвĕçекене кĕве çиет.
4. Сывлăх пулсан пурте пулать.
5. Кĕрхи пуян — хĕл ăшши.
6. Çынна ан тирке, хăвна та тиркемĕç.

### Хăвăра тĕрĕслĕр

Николай Мартынова мĕнле тема çывăх пулнă-ши?

## Ольга Туркай
## (1963)



***Ольга Николаевна Туркай** — чăваш çыравçи. Вăл «Хатĕр пул», «Ялав» журналсенче, «Хыпар» хаçатра, кĕнеке палатинче, чăваш телевиденийĕнче, «Чăваш радио» шеф-редакторĕнче вăй хунă. Журналистикăра кăна мар, поэзире, прозăра тата драматургире те тивĕçлĕ ĕçленĕ. Унăн «Шурă Шупашкар юмахĕ», А.Тарасовпа пĕрле çырнă «Вĕçсе иртеççĕ кайăксем» пьесисене театр сцени çинче те лартнă:. Çавăн пекех вăл прозăлла сăвăсем те çырма ăста. Паллă произведенийĕсем: «Юлташпа вăйсăрри те вăйлă», «Илемпи савăнăçĕ», «Санăн йыхравна эп илтрĕм». О.Туркай хăйĕн хайлавĕсенче тĕнчен илемлĕхне, чăвашлăхăн философилле шухăшлавне, çут çанталăкăн илемлĕхне çырса кăтартнă.*

## ÇУЛÇĂ
*Калав*

Кĕркуннехи хĕвеллĕ уяр кун. Ытти йывăççем пекех, Вĕрене те çулçă тăкнă. Ун çинче ĕнтĕ ик-виçĕ çулçă çеç çакăнса тăнă. Çамрăкрах чухне вăл çулçисене тăкас мар тесе чылай тăрăшнăччĕ. Анчах хуть мĕнле çине тăрсан та вăйлă çил ăна пурпĕрех çаратса хăварнă. Халь ĕнтĕ хура-шур сахал мар курнă йывăç хăйĕн çулçисене упраса хăварас тесе йăшăл та туман.

Кăçалхи кĕркунне Вĕрене тата ытларах кулянnă. Сăлтавĕ те пысăк-çке. Унăн пĕр вăрăм турачĕн вĕçĕнче вăштăр çилпе выляса, хĕвел çумăрĕпе çăвăнса чи илемлĕ çулçă ӳснĕ. Кĕркунне çитсен вара вăл сап-сарă пулса тăнă. Вĕрененe унăн турачĕ çинче пĕчĕк хĕвел ларнăнах туйăннă. Тен, çавăнпах питĕ юратнă вăл ăна.

Юнашар ӳсекен Шĕшкĕ те, Юман та кашни кунах:

— Ах Вĕрене, ытла та хĕрхенмелле-çке сана. Çак çепĕç, черченкĕ, вăрманти чи-чи илемлĕ Çулça мĕнле çухатăн ĕнтĕ, — тенĕ.

Вĕрене хаш-ш! кăна сывланă.

Çулçă вара йывăççем мĕн калаçнине илтмен, тен, илтесшĕн те пулман. Вăл татăлса ӳкнĕ çулçăсем çĕре вĕçсе аннине пăхса ăмсаннă. «Хăçан эпĕ те çапла вĕçĕп-ши?» — шутланă Çулçă.

*О. Туркай*

## Словарь ĕçĕ

**Çаратса хăвар** — оголить
**Кулян** — переживать
**Черченкĕ** — нежный
**Сăлтав** — причина
**Хĕрхен** — жалеть, сочувствовать
**Ăмсан** — завидовать, испытывать зависть
**Хура–шур сахал мар** — немало горя
**Йăшăл та туман** — не шелохнулся

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Калаврa миçе сăнар? Вĕсен ячĕсене каласа тухăр, вырăсла куçарăр.
2. Кĕркунне Вĕрене çинче миçе çулçă çакăнса тăнă?
3. Çамрăкрах чухне Вĕрене çулçисене тăкнă-и?
4. Кăçалхи кĕркунне Вĕрене мĕншĕн куляннă?
5. Шĕшкĕпе Юман Вĕренене мĕн каланă?
6. Çулçă йывăççем калаçнине илтнĕ-и? Мĕн çинчен шутланă вăл?
7. Мĕншĕн автор Шĕшкĕпе Юмана, Вĕренепе Çулçа пысăк сас паллирен пуçласа çырнă?

Пĕррехинче Вĕрене вăйĕ пĕтсе çитнипе тĕлĕрсе кайнă. Çулçă çак саманта çеç кĕтнĕ тейĕн, турат çумĕнчен шăппăн çеç татăлать те… аялалла вĕçме тытăнать. Çил ăна çавăрса илет те аялалла-çӳлелле ярăнтарма пуçлать. «Ах, эпĕ те вĕçетĕп! Мĕнле телей! Мĕнле ырă самант! Эпĕ кайăк пек вĕçетĕп!» — савăннă вăл.

Кăшт вăхăт вĕçкелесен Çулçă турат çумĕнчен татăлнă чухнехи пекех шăппăн çĕре ӳкнĕ. «Мĕскер ку? Мĕншĕн вĕçместĕп?» — ăнланайман вăл. Унталла-кунталла пăхкаланă, ун таврa пĕрешкел шăпаллă çулçăсем выртаççĕ иккен.

— Çук, çук, эпĕ çĕрме тытăнатăп капла! Манăн вĕçес килет! — кăшкăрнă Çулçă.

— Мĕн аташатăн эс шăпăрт кăна çывăрас чухне? Пирĕн шăпа çапла, — анаслaнă май сăмах хушнă унпа юнашар выртакан Юман çулçи.

— Çук, эпĕ тепре вĕçетĕпех! Мана çил кăшт çеç тĕксе ятăр, — ĕмĕтленнĕ Çулçă.

Анчах вăйлă çил вĕрсен те вăл çĕкленеймен, çĕр тăрăх çеç куснă.

Унтан пĕр вĕçĕмсĕр сивĕ çумăр çума пуçланă. Çулçă шăнса ĕнтĕркенĕ. Хăй сывлăшра вĕçнĕ самантa аса илсе хуйхине пусарнă. Шаннă, ĕненнĕ Çулçă тепре çĕкленессе.

*О. Туркай*

## Словарь ĕçĕ

**Вăйĕ пĕтсе çитнипе** — от бессилия
**Шăпа** — судьба
**Шăппăн çеç татăл** — бесшумно оторваться
**Пĕррехинче** — однажды
**Ярăнтар** — катать
**Аташ** — бредить
**Тĕлĕр** — дремать, засыпать
**Шăнса ĕнтĕрке** — закоченеть
**Пĕр вĕçĕмсĕр** — бесконечно, беспредельно

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Çулçă хăш вăхăтра аялалла вĕçме тытăннă?
2. Çулçă мĕншĕн савăннă?
3. Кăшт вăхăт вĕçкелесен Çулçă мĕн тунă?
4. Çулçă мĕн çинчен ĕмĕтленнĕ?
5. Унăн ĕмĕчĕ пурнăçланнă-и? Мĕншĕн?

Пĕр ир çумăр лăскама чарăннă. Хĕвел те пăхнă. Çулçă хĕвел ăшшине туйса кусне вăраххăн уснă. Вăл хăй патне Пысăк çынпа Пĕчĕк çын утса пынине курах кайнă. Вĕсен аллинче карçинкка. Пĕшкĕне-пĕшкĕне çĕр çинче тем шыранă вĕсем. Сасартăк çулçă Пысăкки тепĕр утăм тусанах хăй унăн атти айне пуласса ăнланса илнĕ. «Пĕр самант сывлăшра пулассишĕн мĕн чухлĕ асап курмалла. Акă халь кĕске пурнăçăм лапра ăшĕнче вĕçленĕ», — шухăшланă вăл. Çулçă вилме хатĕрленсе кусне хупнă.

— Атте, ан тапта! Пăх-ха, мĕнле хитре вĕрене çулçи, — илтнĕ вăл. Кусне усса хăй умĕнче Пĕчек çын тăнине курнă.

— Эпĕ ăна киле илсе каятăп. Вазăна лартатăп, — тенĕ Пĕчĕкки. Унтан пĕшкĕннĕ те Çулça çĕклесе илнĕ.

Çулçă вара сасартăк вĕçерĕнесрен хăраса алă çумне тĕршĕннĕ.

*О. Туркай*

## Словарь ĕçĕ

**Лăскама чăрăннă – перестал лить**
**Вăраххăн** — медленно, неторопливо
**Сасартăк** — вдруг
**Утăм** — шаг
**Тĕршĕн** — прижиматься, прильнуть
**Пĕшкĕн** — нагибаться, наклоняться
**Кĕске пурнăç** — короткая жизнь
**Алă çумне тĕршĕн** — прильнуть к руке

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Калавра миçе сăнар? Кашни сăнарне характеристика парăр.
2. Çулçă мĕн çинчен ĕмĕтленнĕ?
3. Пĕр ирхине мĕн пулса иртнĕ? Ĕç мĕнле вĕçленнĕ?
4. Калаври чи çивĕч саманта тупса вулăр. Мĕншĕн çак саманта чи çивĕч самант тесе шутлатăр?
5. Калава вуланăçемĕн санăн кăмăлу мĕнле улшăнчĕ: эсĕ хурлантăн-и, пăшăрхантăн-и е савăнтăн-и? Калав мĕнле туйăм çуратрĕ?

## Халăх ăс-хакăлĕ

Кĕркунне çинчен калакан ваттисен сăмахĕсем тупăр.

## Пултарулăх ĕçĕ

Тĕрлĕ йывăç çулçисен гербарийне пуçтарăр. Пĕр-пĕр йывăç çинчен текст çырăр.

# ÇУТ ÇАНТАЛĂК – ПИРĔН ТĂВАН КИЛ — ПРИРОДА – НАШ ДОМ

**Герасим Харлампьев**
**(1913-1994)**



***Герасим Дмитриевич Харлампьев*** — *проза ăсти, романсемпе повеçсем çырнă. Унăн кĕске пьесисем, пĕчĕк калавĕсем вулакансем хушшинче анлă сарăлнă. Г. Харлампьев хăйĕн произведенийĕсенче çут çанталăк илемлĕхне сăнама, тăван çĕре юратма, чунпа яланах таса пулма вĕрентет. Унăн геройĕсем çут çанталăкпа этемĕн çураçулăхне сăнласа параççĕ. Паллăрах хайлавĕсем: «Кăмăл уçăлсан», «Çурхи кĕвĕсем», «Юрату вилĕмсĕр», «Тăрнасен ташши». Ачасем хапăлласах «Пĕчĕкçеç юмахсем» «Палюк мучи кĕнеки», «Утарта» хайлавĕсене вулаççĕ.*

## КӲЛĔ ХĔРРИНЧЕ
*Калав*

Çуллахи каникул вăхăтĕнче эпĕ час-часах ял вĕçĕнчи çавра кӳлĕ таврашне çитсе куратăп. Унта кунĕпе çӳресен те йăлăхтармасть.

Вырăнĕ ытарма çук илемлĕ! Кӳлĕ хĕррипе ем-ешĕл хăях, çӳллĕ хăмăш, шыв çинчех тĕрлĕ-тĕрлĕ чечек ӳсет. Тăп-тăрă шывра пулă выляни курăнать. Кӳлĕ таврашĕнче хăвалăх. Мĕн тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк çук-ши çак хăвалăхра!

Пĕррехинче эпĕ алла кĕнеке тытрăм та çак кӳлĕ хĕррине пĕчченех кайса лартăм. Манпа пĕрле çӳрекен Йăкăнат час-часах чăрсăрланса кайăксене чулпа персе хăрататчĕ. Çавăншăнах эпĕ унпа пĕрле çӳреме килĕштерместĕп.

Калăр-ха, мĕншĕн хăратас чип-чипер вĕçсе çӳрекен кайăксене? Мĕншĕн тивес никама сиен кӳмен чĕр чунсене? Кӳлĕ хĕррине çитрĕм те хăва хушшине шăппăн çеç вырнаçса кĕнеке вулама тытăнтăм.

Уяр та лăпкă кун. Çывăхрах кайăк юрлани илтĕнет. Мĕнле кăна юрламаççĕ иккен вĕсем, епле кăна çепĕç чĕлхипе чĕвĕлтетмеççĕ? Эпĕ вулама чарăнсах итлеме тытăнтăм. Кайăксен концертне итлесе савăннă майăн манăн та вĕсемпе пĕрле юрă шăратассăм килчĕ. Анчах эпĕ вĕсем пек юрлаймастăп-çке, вĕсен чĕлхине пĕлместĕп.

Çакăн пек шухăшсемпе ларнă май кӳлĕрен инçех те мар такам шыва чăмпăлтаттарни илтĕнсе кайрĕ. Эпĕ сăнама пуçларăм. Акă çывăхрах чăмпăлтаттарать, тик-тик! тик-тик! тени илтĕнет. Пăхатăп — шăп манăн умрах хăмăшсем хушшипе кайăк кăвакалсем иккĕн ишсе тухрĕç. Хăйсем пĕр-пĕринпе çав тери килĕшӳллĕ шăкăлтатса пыраççĕ.

Эпĕ вĕсене курманçи пулса пĕр хускалмасăр пăхса ларатăп. Вĕсем мана асăрхарĕç пулин те вĕçсе тармарĕç. Кăшт чарăнчĕç те малалла иртсе кайрĕç.

Унччен те пулмарĕ хайхи кăвакалсем еннелле ман пуç урлă туя вăшлатса иртрĕ. Кайăксем çăтăл-çăтăл çĕкленсе вĕçсе кайрĕç.

Ҫаврӑнса пӑхатӑп – хамран инҫех те мар Йӑкӑнат тӑра парать. Вӑл манран та маларах килнӗ-мӗн. Кӑвакалсене курсан вӗсем хӑй патнерех пыччӑр тесе пытанса ларнӑ.

Йӑкӑнат кайӑк кӑвакалсене туяпа персе амантаймарӗ. Эпӗ куншӑн хӗпӗртерӗм те вара, мӗншӗн тесен лешӗсем ҫав тери илемлӗччӗ.

Ҫак кунхине эпӗ кӳлӗ хӗрринче каҫ пуличченех ҫӳрерӗм. Тӗттӗмленес умӗн ҫав кӑвакалсем кӳлӗ ҫине каллех вӗҫсе килчӗҫ. Анчах ман патӑма вӗсем урӑх ҫывхармарӗҫ, мана курсан аякранах вӗҫсе тарчӗҫ.

Пӗрре шуйхатнӑ кайӑксем этемрен шикленме пуҫлаҫҫӗ иккен. Вӗсем ҫын аллинче пӑшал е патак-мӗн курсан та катаранах хӑраса тараҫҫӗ. Ку ҫеҫ те мар, кайӑксем ҫын хӑйсем ҫине пӑхнине, иртсе пынӑ чух чарӑнса тӑнине е тата вӗсем енне алӑпа тӗллесе кӑтартнине те питӗ юратмаҫҫӗ. Хӑйсене «асӑрхамасан» е алӑпа тӗллесе хӑратмасан вӗсем кӑштах шикленеҫҫӗ пулин те ҫынна хӑйсенчен ирттерсе яраҫҫӗ.

Ӑна эсир те асӑрханӑ пулӗ?

*Г. Харлампьев*

## Словарь ӗҫӗ

**Тӑп–тӑрӑ шыв** — прозрачная вода
**Кӳлӗ** — озеро
**Шуйхат (хӑрат)** — пугать, переполошить
**Чӑмпӑлтат** — плескаться
**Пӑшал** — ружье
**Шакӑлтатса пыраҫҫӗ** — оживленно галдят
**Туя вӑшлатса иртрӗ** — стремительно пролетела палка
**Амант** — ранить
**Шиклен** — испугаться

**Проблема** — это основной вопрос, который поднял автор.
**Проблема** — илемлӗ хайлавра хускатнӑ тӗп ыйту.

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче автор час-часах ӑҫта ҫитсе курать?
2. Мӗншӗн автора ҫак вырӑнта кунӗпе ҫӳресен те йӑлӑхтармасть? Мӗнлерех вырӑн-ши вӑл? Тупса вулӑр.
3. Автор мӗншӗн ҫак вырӑна Йӑкӑнатпа каясшӑн мар?
4. Автор тавралӑха сӑнаса ларнӑ хушӑра кӳлӗрен мӗнле кайӑксем ишсе тухнӑ?
5. Лӑпкӑ ишекен кайӑксем мӗн пирки самантрах ҫӗкленсе вӗҫсе кайнӑ?
6. Мӗншӗн кайӑксем автор патне тек ҫывхарман? Кайӑксем мӗн тунине юратмаҫҫӗ?
7. Автор мӗнле ача? Йӑкӑнат мӗнле ача? Кластер туса хуравлӑр.
8. Кайӑкпа ҫын туслашма пултарнӑ тӗслӗхсене пӗлетӗр-и? Кинора е чӑн пурнӑҫра пулнине каласа парӑр.

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

1. Автор калавра мӗнле проблема хускатнӑ?

2. «Кӳлӗ хӗрринче» калав авторӗн пултарулӑхӗ ӑҫта-ӑҫта палӑрнӑ?

## Ӳнер тата сӑмах тӗнчи

Г. Харлампьев ӑста ӳнерҫӗ те пулнӑ. Унӑн ӳкерчӗкӗсемпе тӗрлӗ кӗнеке-журнал хуплашкисене илемлетнӗ, кулӑшла ӳкерчӗкӗсене «Капкӑн» журналта пичетленӗ. Интернет усҫӑлӑхӗнчен ӳнерҫӗн паллӑрах ӗҫӗсене тупӑр, каласа пама хатӗрленӗр.

## Халӑх ӑс-хакӑлӗ

*Икӗ юпари сӑмах майлашӗвӗсене ҫыхӑнтарса ваттисен сӑмахӗсем йӗркелӗр. Калавӑн тӗп шухӑшӗпе тӳр килекен ваттисен сӑмахӗсене палӑртӑр.*

| | |
|---|---|
| 1. Ҫӑла ан сур — ……………... | а. таса шыв. |
| 2. Темле пысӑк юхан шыв та … | ӑ. ҫут ҫанталӑк илемӗпе пуянлӑхӗ. |
| 3. Кайӑксем — ……………….. | б. хӗвел типӗтет. |
| 4. Таса ҫӑлра — ………………. | в. хӑвӑнах ӗҫмелле пулӗ. |
| 5. Ҫумӑр йӗпетсен те, ……….. | г. пӗчӗк шывран пуҫланать. |

### Георгий Орлов
### (1925-2007)



***Георгий Орлов (Егор Федорович Орлов)*** *– чӑваш поэчӗ, прозаикӗ, куҫаруҫӑ. Хӑйӗн прозӑлла тата лиро-эпикӑлла хайлавӗсенче вӑрҫӑ паттӑрӗсене мухтаса ҫырать. Кулӑшла, ҫав вӑхӑтрах пулмасла халапсем урлӑ ачасене ҫут ҫанталӑк тӗнчипе паллаштарать, ӑна юратма вӗрентет. Калавӗсене йеркеленӗ чухне ваттисен сӑмахӗсене тӗпе хурать: «Ир такӑнсан каҫченех», «Тухман ҫын тухсан тӑман тухать» тата ыт. те. Унӑн паллӑрах кӗнекисем: «Тантӑшсем», «Кил ҫути», «Тривим йысна калавӗсем», «Поэмӑсем», «Ирхи йӗрсем».*

## ҪУХАТУ
*Калав*

Кӑмпана чылай ҫул ҫӳрекен ҫыннӑн хӑйне уйрӑмах килӗшекен вырӑн пур. Ҫавӑн пек кӗтес Йӑлӑмра манӑн та пурччӗ. Хырлӑ-хурӑнлӑ, сӑртлӑ-лапамлӑ тавралӑх. Пысӑках мар вӑл, анчах питӗ тараватлӑ: унтан эпӗ пушӑ карҫинккапа тухнине астумастӑп.

Тӗлӗнмелле кайӑк пурӑнатчӗ унта. Кам пӗлет, тен, ӑна та эпӗ ҫеҫ асӑрханӑ-и? Вӑл, ҫав вырӑнӑн кӑмӑллӑ хуҫи евӗрскер, мана курсассӑнах юрлама тытӑнатчӗ: пи-пип, пи-пи-пи… «Кил-кил-кил…» — тесе ӑшшӑн чӗнетчӗ пек.

Пӗчӗкчӗ хӑй. Сасси вара ҫав тери уҫӑччӗ. Ӑна эп нихҫан та манас ҫук. Инҫетрен ун кӗвви янанах тунсӑхлӑ пекчӗ. Ҫывхарнӑ май вӑл савӑкланнӑҫемӗн савӑкланнине сисеттӗм.

Ятарласа тӗл пулма хирӗç тухнӑ майлах, мана вӑл кирек хӑçан та прачак хӗрринче кӗтсе илетчӗ. Пӗр-пӗр хыр тӑрринче. Ытлашши аяла анмасчӗ, анчах эпӗ ӑçталла пӑрӑнаттӑм, вӑл та çавӑнталлах пыратчӗ. Йывӑç çинчен йывӑç çине вӗçе-вӗçе. Сӑнаса тӑман эп. Çук. Сассинченех пӗлеттӗм. Вӑл, кӗвви ӗнтӗ, вӑйсӑрланса пыратчӗ те самантлӑха пачах çухалатчӗ, унччен те пулмасть каллех хыттӑн-хыттӑн янӑраса каятчӑ. Çывӑхрах.

Хам пӗччен чухне çав кайӑк чӑнах та ырӑран ырӑ пӗртен-пӗр савӑк юлташчӗ ӗнтӗ. Ӑна итлесе, ытараймасӑр тӑнласа мӗнпур тунсӑха манаттӑм.

Эпӗ хӑйӗн чиккинчен (çав таврараан, эппин) аяккарах кайсассӑн тин вӑл манран юлатчӗ. «Кил, кил, татах кил…» тенӗн илтӗнетчӗ вара унӑн палӑрмаллах салхуланнӑ кӗвви майӗпен-майӗпен шӑпланса.

Пачах урӑх çӗрте, вӑл тӑрӑхран чылай инçетре чух та, эпӗ асра час-часах çав вырӑна çитеттӗм, юратнӑ кайӑкӑн тунсӑхпа хутӑшнӑ илӗртӳллӗ кӗввине итлеме пикенеттӗм. Чуна ытла та ӑшӑччӗ унта. Çавӑнпа хамӑн çула кукӑртса-тавралатса çав кӗтесе эпӗ сахал мар кӗрсе тухнӑ.

*Г.Орлов*

## Ыйтусемпе ӗçсем:

1. Калав авторӗ ӑçта çӳреме юратнӑ?
2. Автор çӳренӗ вырӑн мӗнлерех? Çав вырӑна тупса вулӑр.
3. Çак вырӑнта ӑна мӗншӗн килӗшнӗ?
4. Унта мӗнлерех кайӑк пурӑннӑ?
5. Кайӑк автора хӑш вырӑнта, мӗнлерех кӗтсе илнӗ? Тупса вулӑр.
6. Кайӑк сасси аякран мӗнле илтӗннӗ? Çывӑхран мӗнле илтӗннӗ?

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

*Калаври 3 абзацра антоним сӑмахсем тупӑр.*

Çапла виçӗ кӗр иртрӗ. Тӑваттӑмӗш кӗркунне, сентябрь пуçламӑшӗнче, мана çав кайӑк кӗтсе илмерӗ. Унччен, эрне малтан, вӑл нихçанхинчен те хавасрах юрларӗ. Темиçе хут та çывӑхранах çаврӑна-çаврӑна иртрӗ. Ӑсатасса та яланхилле мар, инçерех ӑсатрӗ мана. Теме сисрӗ пулмалла çав.

Эпӗ кайӑка чылай хушӑ кӗтрӗм. Вӑл прачак хӗрринче сас памарӗ пулсассӑн та унӑн кӗввине пурпӗрех илтме ӗмӗтленеттӗм. Лапам тӑрӑх урлӑ-пирлӗ утрӑм, сывлӑмлӑ упа саррисем хушшинчен тухса сӑрт хӗррипе çаврӑнса килтӗм. Вӑхӑт-вӑхӑтӑн чарӑнса пур-çук сас-чӗвве тӑнларӑм. Кӗтнӗ çемӗ янрамарӗ. Сасартӑк темскер çухатнӑ пек туйрӑм хама. Кӑштахран эпӗ кӑвакарнӑ хыр лӑссисем çинче юнлӑ тӗксем сапаланса выртнӑ тӗле çитсе тӑтӑм…

Унтанпа çичӗ хут та çулçӑ тӑкрӗç çавӑнти хурӑнсем, хырсем те лӑссисене ик-виçӗ хут улӑштарчӗç. Кӑмпа халь те нумай тухать вӗсен айӗнче. Кайма кӑмӑлӑм çук.

Хӑйӗн юрӑçне упраайман тавралӑхран чун ӗмӗрлӗхех сивӗнчӗ.

*Г. Орлов*

## Словарь ĕçĕ

**Сăртлă-лапамлă** — холмисто-низинный
**Сас-чĕв** — звук
**Прачак** — просека (в лесу)
**Сывлăм** — роса
**Чикĕ** – граница
**Упа сари** — папоротник
**Илĕртӳллĕ кĕвĕ** — манящая мелодия

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Калаври ĕçсем ăçта тата хăçан пулса иртнĕ?
2. Автор мĕншĕн вăрмана çӳреме юратнă?
3. Мĕншĕн кайăк сасси аякран тунсăхлă пек туйăннă, автор çывхарнăçемĕн савăкланса пынă?
4. Кайăк сасси ăна мĕнле сăмахсем каланă евĕр илтĕннĕ? Тупса вулăр.
5. Авторăн чунĕ палланă вырăнтан мĕншĕн сивĕннĕ?
6. «*Чуна ытла та ăшăччĕ унта*», — тенине мĕнле ăнланатăр? Сирĕн пурнăçра ун пек самантсем пулнă-и? Каласа парăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. *Автор калавра мĕнле проблема хускатнă?*
2. *Калав мĕнле кăмăл çуратрĕ? Кластер туса хуравлăр.*
3. *Определенисен синонимĕсене тупăр:*

Тараватлă тавралăх — …
Савăк юлташ — …
Илĕртӳллĕ кĕвĕ — …

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен пуçламăш пайне тупăр. Калавăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахне палăртăр.*

………………. — çут çанталăк ачи.
………………. — икĕ йывăç ларт.
………………. — çут çанталăк илемĕпе пуянлăхĕ.
………………….. пĕчĕк шывран пуçланать.
…………………… пирĕн тăван кил.
…………………… хĕвел типĕтет.



### Геннадий Мальцев
### (1929-1991)

***Геннадий Степанович Мальцев*** *— чăваш çыравçи. Халăх хушшинче ытларах калавсем, повеçсем, очерксем тата сăвăсем çырнипе паллă. Унăн сăввисене юрра та хывнă: «Сана савсан» (Ю. Кудаков), «Темрен хакли» (Н. Заводскова), «Сансăр эп никама юратман» (Н.Праулов) тата ыт. те.*

*Г. Мальцев произведенийĕсен тĕп теми — тăван çынсене хакласси, юлташсемпе пĕр чĕлхе тупасси, ваттисене сума сăвасси. Автор хăйĕн хайлавĕсенче ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсене ăша хывассине, вĕсем пурнăçра тĕрĕс утăм тума пулăшнине кăтартса парать. Паллă произведенийĕсем: «Уй куçлă, вăрман хăлхаллă», «Пирĕн асанне», «Кама - кулă, кама - хулă», «Ваттисем ахаль каламан…», «Вĕренĕн те вĕçĕ пур».*

## ТĂВАНСЕМ

*Юмах*

Çулталăкпа Çĕр питĕ туслă пурăннă. Вĕсем вун икĕ ача ÿстернĕ: ултă хĕрпе ултă ывăл. Хĕрĕсем пĕринчен тепри чипер те ĕçчен. Ывăлĕсем маттур та хăюллă. Чи аслисем — Январьпе Февраль.

Аслă хĕрне ашшĕпе амăшĕ Март тесе чĕннĕ. Унтан Апрель, Май, Июнь, Июль, Август хĕрĕсем çуралнă. Вĕсем хыççăн каллех ывăлсем — Сентябрь, Октябрь, Ноябрь, Декабрь. Тăвансем пурте питĕ туслă пурăннă.

— Çу иртет, — тенĕ пĕр ирхине кĕçĕн хĕрĕ Август, — атьăр ман пата хăнана.

Пурте килĕшнĕ. Тепĕр кунне вĕсем Август патĕнче хăнара пухăннă. Кăмăллăн кĕтсе илнĕ Август пиччĕшĕсемпе шăллĕсене, аппăшĕсене. Сĕтел çине çĕнĕ тырăран пĕçернĕ çăкăр, çĕнĕ çĕр улми, улма-çырла, сĕт-çу, аш яшки лартнă. Пурте Августа тав тунă. Август хăй те тăванĕсене тав тума манман.

— Эсир ман валли хĕлле юр, çулла çумăр çутартăр, хĕвел пăхтартăр, ăшă çанталăк илсе килтĕр. Çавăнпа та тыră-пулă, улма-çырла, пахча çимĕç тухăçлă пулчĕç. Малашне те туслă пурăнар, тăвансем. Хамăр ĕçе яланах вăхăтра тăвар.

### Словарь ĕçĕ

**Çулталăк** — год
**Тыră-пулă** — урожай
**Ывăл** — сын
**Малашлăх** — будущее
**Хăна** – гость
**Кăмăллăн кĕтсе ил** — встретить приветливо
**Çĕнĕ тырăран пĕçернĕ çăкăр** — хлеб нового урожая
**Улма-çырла** — фрукты

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Камсем 12 ача ÿстернĕ? Вĕсем мĕнле пурăннă?
2. Хĕрĕсем мĕнле пурăннă?
3. Çулталăкпа çĕрĕн хĕрĕсем мĕн ятлă? Ывăлĕсем мĕн ятлă пулнă?
4. Çулталăкпа çĕрĕн ачисем мĕнле пулнă?
5. Пиччĕшĕсемпе шăллĕсем, аппăшĕсемпе йăмăкĕсем кам патĕнче хăнара пухăннă?
6. Август сĕтел çине мĕн-мĕн лартнă? Унăн сĕтелĕ мĕншĕн пуян пулнă?

### Хăвăра тĕрĕслĕр

Уйăх ячĕсене чăвашла каласа тухăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Правилăна малалла тăсăр.*

**Сказка** – это **... .**
**Юмах** тесе … .

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Тупмалли юмахăн тупсăмне пĕлĕр.*

Çеçен хир варринче ватă юман, ватă юманăн вун икĕ турат, вун икĕ туратра тăватшар йăва, тăватшар йăвара çичшер çăмарта.

## Пултарулăх ĕçĕ

Юмах тăрăх ÿкерчĕк тăвăр. Ÿкерчĕкре хăвăр çуралнă уйăха уйрăммăн палăртăр. Эсир ăна мĕнлерех тума пултартăр?

**Григорий Луч**
**(1931-1998)**



***Григорий Луч (Григорий Васильевич Васильев)*** *– проза ăсти. Унăн çырас пултарулăхĕ кĕске калавсем çырнинчен пуçланнă: «Тăрнасем», «Чĕкеç мĕншĕн сивĕннĕ?», «Пулă хуппи». Ача-пăча валли çырасси çыравçăшăн киленĕç пулнă: вĕсене ăс парасси, çут çанталăка туйма вĕрентесси, унăн пуянлăхне упрасси тĕп темăсем пулса тăраççĕ унăн хайлавĕсенче. Г. Луч хăйĕн произведенийĕсенче вăрçă вăхăтĕнчи ачасемпе çамрăксен тылри ĕçĕсене те çутатса панă, салтак ачисемпе ашшĕ-амăшĕсен паттăрлăхне кăтартнă. Çав хушăрах унăн кулăшла хайлавĕсем пурнăçри пăтăрмахсене сăнланă. Паллăрах произведенийĕсем: «Паттăрлăх», «Кайăк тусĕсем», «Куçук», «Сантăр», «Виçкĕтеслĕ çыру», «Çылăх мар, асанне», «Икĕ сунарçă».*

## ВĂРМАН ТУСĔСЕМ

*Калав*

Ачасем пĕррехинче вăрмана кайма шутларĕç. Якрав вĕсене кайăксем валли апат илме хушрĕ.

Йĕлтĕр туйисене вылятса Ваня Козин ыттисенчен мала иртрĕ. Анчах тепĕр çĕр метртанах ăна Якрав хуса çитрĕ. Çапла пĕр-пĕринпе ăмăртса вĕсем часах вăрман хĕррине çитрĕç. Вĕсене лесник кĕтсе илчĕ.

— Эй, курăр-ха, пакша, — шăппăн каларĕ Ваня. Унтан çăкăр сăмси тытса пакша еннелле утрĕ. Анчах лешĕ туратран турата сиксе чăтлăха кĕрсе кайрĕ. — Çăкăр та çиесшĕн мар. Çак сивĕре мĕн çисе пурăнас тет-ши? Йĕкел те курăнмасть кунта.

— Пакша кăмпа та çиет. Шăшие те тиркемест.

Ҫамрăксем рюкзакĕсене пушатрĕҫ. Апатне тункатасем ҫине, чăрăшпа хыр айне хурса пачĕҫ. Ҫав хушăра вăрман вăранчĕ. Тĕрлĕ кайăк юрри илтĕнсе кайрĕ.

— Мĕнле, килĕшрĕ-и хĕллехи вăрман? — кăмăллăн ыйтрĕ Якрав Ваньăран.

— Хĕлле халиччен те пулнă эпĕ кунта, анчах паянхи чухлĕ кайăк нихҫан та курман.

*Г. Луч*

## Словарь ĕҫĕ

**Пĕррехинче** — однажды
**Вăрман вăранчĕ** — лес проснулся
**Ҫăкăр сăмси** — горбушка хлеба
**Йĕлтĕр туйи** — лыжные палки
**Йĕкел** — желудь
**Ăмăрт** — соревноваться
**Тунката** — пенек

## Ыйтусемпе ĕҫсем:

1. Ачасем ăҫта кайма шутланă?
2. Якрав ачасене мĕн илме хушнă?
3. Ачасене вăрманта кам кĕтсе илнĕ?
4. Вĕсем вăрманта мĕн курнă?
5. Рюкзакри апатсене ачасем ăҫта хунă?
6. Сирĕн шутпа, вăрманта мĕнле кайăксем юрланă-ши?
7. Эсир хĕллехи вăрманта пулса курнă-и? Хĕллехи вăрман мĕнле? Паллă ячĕсемпе усă курса ыйтăва хуравлăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Ҫут ҫанталăк ҫинчен ҫырнă произведенисене аса илĕр. Вĕсен авторĕсем камсем?

## Пултарулăх ĕҫĕ

Пысăк кăсăя ҫинчен Википединчен информаци ҫырса килĕр. Кăсăяна паркра, ялта е вăрманта куртăр пулсан телефон ҫине ӳкерсе илĕр е юрланине ҫырса илĕр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене чăвашла куҫарăр е тӳр килекен чăвашла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

1. Одно дерево срубишь — десять посади.
2. Природа — наш дом.
3. Человек — дитя природы.
4. Птицы — наши пернатые друзья.
5. Не плюй в колодец, пригодится воды напиться.

## Александр Пушкин
## (1799 – 1837)



### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Кам вăл А.С. Пушкин?
2. Эсир А.С. Пушкинăн хăш хайлавĕсене вуланă?
3. Вуланă хайлавсен тĕп темисене палăртăр.
4. А. Пушкинăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă-и? Касем куçарнă? Информацие Интернет уçлăхĕнче тупăр.

## ХĔЛЛЕ…

*(«Евгений Онегин» роман сыпăкĕ)*

Январĕн виççĕмĕш çĕрне
Тин ÿкрĕ юр. Ирех тăрайрĕ
Татьяна, кантăкран пăхайрĕ:
Шуралнă-мĕн лупас, картиш,
Чечек тăпри, хÿме тавраш;
Çÿхен шăнса тĕрленнĕ кантăк,
Кĕмĕлленеççĕ йывăççем,
Йалт-ялт сикеççĕ чакаксем;
Сăртсем хĕл çиттипе хупланнă —
Тирпейлĕн, кăпăш, çеп-çемçе;
Шап-шурă та çап-çутă çеç.
Хĕлле!.. Хресчен çынни хаваслăн
Çĕн çул хывать çунипелен;
Лаши юра сиссе вăраххăн
Лăстăртатать юрттипелен;
Ларман юра çурса сатуррăн
Пуçтах кÿме вĕçет маттуррăн,
Тăлăппалан ун ямшăкки,
Вăл сыхнă хĕрлĕ пиçиххи.
Ав чупкалать ача хастаррăн —
Хăй пĕчĕк çунашки çине
Лартса çÿрет вăл йыттине;
Тăм илнĕ пÿрнине, мăнтарăн;
Пÿрни сурать, хăй шав кулать,
Ун амăш кантăкран юнать…

*А. Пушкин,*
*(П. Хусанкай куçарнă)*

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвăра хĕлĕн хăш тапхăрĕ сăнланнă? Хĕл пуçламăшĕ-и? Хĕл вĕçĕ-и?
2. Хĕл пуçламăшĕн мĕнле-мĕнле сăнлăхĕсене ÿкернĕ? Лупас, карташ, тăпра, хÿме, хуралтăсем, йывăççем, сăртсем, чÿрече кантăкĕ епле сăнарланнă? Мĕнле сăмахсемпе усă курнă? Тупса вулăр.
3. Сăвăра пĕрремĕш юра мĕнле сăмахсемпе сăнланă? Тупса вулăр. Пĕрремĕш юр çинчен эсир тата мĕн хушса калама пултаратăр?

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Кăçал пĕрремĕш юр хăçан ÿкрĕ? Вăл сирĕн асра мĕнле тăрса юлчĕ? Каласа парăр.
2. Иван Шишкинăн «Хĕлле» картинипе Викентий Лукиянов «Хĕллехи каç» картинине танлаштарса парăр.



*Иван Шишкин «Хĕлле»*



*Викентий Лукиянов «Хĕллехи каç»*

## Итлев-тăнлав

А. Пушкинăн «Евгений Онегин» роман сыпăкне вырăсла итлесе пăхăр. Янăравлăхне чăвашлипе танлаштарăр.

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Илемлĕ вуласа парăр. Сăвă мĕнле кăмăл çуратрĕ?

## Пултарулăх ĕçĕ

Ӳкерчĕксенчен пĕрне суйласа илĕр те текст калăплăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле термин пытаннă-ши?*

... — это то, о чем рассказывается в произведении.
... — хайлаври мĕн çинчен каласа кăтартни.

## СЕРГЕЙ ЕСЕНИН
## (1895 – 1925)



***Сергей Александрович Есенин*** *– вырăссен паллă поэчĕ. Чи малтанхи сăввисем 1914 çулта пичетленме пуçланă. Поэт ытларах пейзаж лирикине кăмăлланă. Вăл хăйĕн произведенийĕсемпе çут çанталăка сăнама, унăн илемлĕхне туйма вĕрентет. Вырăс халăхĕн чун илемлĕхĕ те ăна канăçсăрлантарнă. Вăл хăйĕн сăввисенче ăшри таса туйăмсене, çыннăн ĕçченлĕхне, кăмăл-туйăмне сăнланă. Паллă произведенийĕсем: «Çĕмĕрт», «Хурăн», «Хĕл килет янрашса», «Хĕлле», «Тăлăхсем» тата ыт. те. Сергей Есенин сăввисене чăвашла куçарнă.*

## СЕНКЕР МАЙ



Сенкер май. Çутă шуçăм ăшши.
Сас памасть кил хапхи — калăн, çĕмрĕк.
Сывлăшра — йӳçĕ эрĕм шăрши.
Ыйăхра — шурă шупăрлă çĕмĕрт.
Урмăш уйăх кăвак кантăкран
Тирĕнсе шăтăкла каркăç витĕр
Ӳкерет урайне аякран
Эрешсем — тĕлĕнтермĕшсем питĕ.
Сад шур кăпăк пек кăпăш, кăтра.
Ун çинче тăп тăрать кĕмĕл уйăх.

*С. Есенин (Георгий Ефимов куçарнă)*

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвăра çуркуннен хăш самантне сăнланă? Ирхи саманта-и? Кăнтăрлахине-и? Е каçхи вăхăта-и? Автор çак саманта мĕнлерех кăмăлпа сăнлать?
2. Сăвăçă çĕмĕрте мĕнлерех сăнланă? Тупса вулăр.
3. Эсир çĕмĕрте мĕнлерех сăнласа пană пулăттăр?
4. Çурхи сад мĕнлерех? Автор ăна мĕнпе танлаштарать? Эсир çурхи сада мĕнпе танлаштарнă пулăттăр?
5. Сăвва мĕншĕн «Сенкер май» ят панă?

### Итлев-тăнлав

С. Есенинăн «Сенкер май» сăввăн вырăсла вариантне итлесе пăхăр. Янăравлăхне чăвашлипе танлаштарăр.

### Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Илемлĕ вуласа парăр. Сăвă мĕнле кăмăл çуратрĕ?

# УСАЛ ĔÇПЕ ЫРĂ ЯТ ИЛЕЙМĔН —
# БЕЗ ДОБРЫХ ДЕЛ НЕ БУДЕТ И ДОБРОГО ИМЕНИ

**Геннадий Волков**



***Геннадий Никандрович Волков*** *– халăх педагогикине тĕпчесе чапа тухнă академик. Унăн хайлавĕсен тĕп палли – ăс парасси тата пурнăç пурăнма вĕрентесси. Хайлавĕсене Г.Н. Волков ятарласа ачасем валли çеç çырман, кунта çитĕнсе çитнĕ çын валли те ăс пухмалли, шухăшласа пăхмалли тем чухлех. Вĕсенче çемьере, кил-йышра тату пурăнмаллине, халăхра хăвна тивĕçлĕ тытмаллине, юратмаллине тата туслă пулмаллине вĕрентсе калани тĕпре.*

## СУЯПА ИНÇЕ КАЯЙМĂН
*Притча*

Пĕр çын мĕн ачаранпах ухмахла шӳт тума та суйма юратнă тет. Пĕррехинче ирхине хаяр сасăпа:

— Кашкăр! Кашкăр! — тесе кăшкарса ячĕ тет.

Акă ун патне кӳршĕ-аршисем чупса та çитеççĕ. Пăхаççĕ: нимĕн те çук. Çынни вара хăй ахăлтатса кулса ларать тет.

Пулăшма пынисем ăна ятларĕç-ятларĕç те килĕсене кайрĕç тет.

Тепĕр кунхине кăнтăрла çак çын:

— Пушар! Пушар! — тесе кăшкăрса ячĕ тет.

Кӳршĕсенчен хăш-пĕрисем пурпĕрех шаннă-шанманах чупса çитрĕç тет. Кураççĕ: леш каллех ахăлтатса кăна ларать тет.

Ак хайхискер, пĕр тĕттĕм каçхине ун çуртне вăрăсем кĕреççĕ тет.

— Вăрă! Вăрă! — тесе кăшкăрать тет ку пĕтĕм вăйран.

Анчах кӳршĕ-аршăсем ку татах улталать тесе ун патне пĕри те пымарĕç тет.

Вăрăсем çакăнне пĕр япала хăвармасăр çаратса тухса кайрĕç тет. Çийĕнчи кĕпи-йĕмне те хывса илчĕç тет.

Ирхине кӳршисем çак суеçĕ макăрса ларнине курах каяççĕ тет, анчах ăна ĕненмерĕç те, хĕрхенмерĕç те тет. Макăрам пекки çеç тăвать пуль тесе пăрăнса утрĕç тет.

«Çынна улталăп тесе ан шутла, хăвна улталани анчах пулать», — тесе вĕрентнĕ ваттисем. Вĕсен чăн сăмахне итлемесен ыррине кураймăн.

Пĕрре улталан, иккĕ улталан, виççĕмĕшĕнче ларса йĕрен.

*Г.Волков*

Словарь ĕçĕ

**Шӳт** — шутка

**Кӳршĕ-аршă** — соседи

**Вăрă** — вор
**Хаяр** — злой
**Çарат** — обворовать
**Шаннă – шанман** — недоверчиво
**Суеçĕ** — лгун

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Пĕр çын мĕн тума юратнă?
2. Кӳршĕсене çак çын мĕн тесе суйнă?
3. Çак çын патне вăрăсем килсен кӳршĕсем мĕншĕн пулăшма пыман?
4. *«Çыннаулталăп тесе ан шутла, хăвна улталани анчах пулать»,* — тенине мĕнле ăнланатăр?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Притчăра мĕнле проблема хускатнă?
2. Ку притча мĕне вĕрентет? Ăнлантарăр.
3. *«Пĕрре улталан, иккĕ улталан, виççĕмĕшĕнче ларса йĕрен»* тенине мĕнле ăнланатăр?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Икĕ юпари сăмах майлашĕвĕсене çыхăнтарса ваттисен сăмахĕсем йĕркелĕр:*

| | |
|---|---|
| 1. Усал ĕçпе ……………. | а. виççĕмĕшĕнче ларса макăрăн. |
| 2. Ырă ят ……… | ă. ачаран паллă. |
| 3. Пĕрре улталан, иккĕ улталан … | б. ылтăнран сутă. |
| 4. Ырă çынна ……………. | в. ыр ятпа асăнаççĕ. |
| 5. Ырă çын пуласси ……………… | г. ырă ят илеймĕн. |

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле термин пытаннă-ши?*

Небольшой рассказ, иносказание, в котором заключено религиозное или моральное поучение — **…**

# ĔÇ ÇЫННА ИЛЕМ КŸРЕТ — ТРУД КРАСИТ ЧЕЛОВЕКА

## Александр Галкин
## (1928-2002)



***Александр Алексеевич Галкин*** *— сăвăçă, чăваш халăхĕн паллă юпатаруçи. Унăн хайлавĕсемпе чăваш композиторĕсем икçĕре яхăн юрă кĕвĕленĕ. Ачасем валли çырнă хайлавсем: «Пĕчĕк ĕçченсем», «Читлĕхри хăнасем», «Юптарусем», «Çунатлă улăп», «Аптраман Роман», «Сĕрен кĕперĕ умĕнче». Юптаруçă хăйĕн произведенийĕсенче ĕçе, çут çанталăка юратма вĕрентет, чĕр чун сăнарĕсем урлă воспитани, пĕлÿ парать. Ача-пăча литературинче вара туслă пурăнма вĕрентекен «Икĕ автан» сăвви анлă сарăлнă.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Мĕн вăл юптару?
2. Эсир мĕнле юптарусем вуланă? Вĕсене кам çырнă?
3. Вырăссен паллă юптаруçине калăр.

## ПУШĂ ĔÇЧЕНЛĔХ
*Юптару*

«Ампар» текен ассоциаци президенчĕнче
Ларать Кушак ĕçленĕ пек туса
ир пуçласа каçчен.
Шăшийĕ те Йĕке Хÿри
тĕпĕртетет кăна ун хыçĕнче!
Тырра кашни
хăй йăвине туртнипеле пĕр ÿркенми
Ампарăн пÿлмисем
пушаннă ĕнтĕ унăн ним юлми.
Вăл пур —
йĕрке тăвас проблемăсем пирки çаплах
Трибунăсем çинчен
сăмах акать тар кăларсах.

*А.Галкин*

### Словарь ĕçĕ

**Ампарăн пÿлми** — амбарная перегородка
**Ĕçленĕ пек туса** — делая вид, что работает
**Йĕке Хÿре** — крыса
**Тĕпĕртет** — топать, греметь ногами
**Пушан** — пустеть
**Йĕрке тăвас проблемăсем** — проблемы о наведении порядка
**Сăмах акать** — *перен.* сеять слово

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Юптарура миçе сăнар? Вĕсен ячĕсене каласа тухăр, вырăсла куçарăр. Мĕншĕн вĕсене автор пысăк сас паллирен пуçласа çырнă?
2. Юптарури сăнарсен ĕç хĕлне сăнласа парăр. Кушак ăçта тата мĕнле ĕçлет? Юптарури йĕркесене тупса вулăр.
3. Шăшипе Йĕке Хӳре мĕн тăваççĕ?
4. Кушак трибунăсем çинчен мĕн калать?
5. Кушак пурнăçри мĕнле çынсене аса илтерет?
6. Шăшипе Йĕке Хӳре пурнăçри мĕнле çынсене аса илтереççĕ?

**Басня** – это небольшое произведение, написанное стихами или прозой, в котором высмеиваются пороки и недостатки людей – хитрость, ложь, лесть, жадность, глупость и др.

В баснях обычно действуют животные, в которых мы легко узнаём людей.

**Юптару** – сăвăласа çырнă ытарлă пĕлтерĕшлĕ сатирăллă хайлав.

Юптарури чĕр чунсемпе тискер кайăксен сăнарсем çынсен начар енĕсемпе çитменлĕхĕсене питлеççĕ: айванлăха, çăткăнлăха, чурусăрлăха, вĕçкĕнлĕхе, чеелĕхе, сĕмсĕрлĕхе.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Юптарура автор мĕнле проблема хускатнă?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен пуçламăш пайне тупса палăртăр:*

…………… — вăл хăй санран хăратăр.
…………... — кахал пăсать.
…………... ырана ан хăвар.
…………... виççĕри хĕр ача амăшне пулăштăр.

### Порфирий Афанасьев
### (1942)



***Порфирий Васильевич Афанасьев*** *— поэт, драматург, проза ăсти. Вăл Чăваш литературинче тĕнче литературин тĕслĕхĕсене сарас телĕшпе нумай вăй хурать, У. Шекспир, Ф. Достоевский, М. Шолохов, Г. Лорки, Г. Тукай, Х. Такташ произведенийĕсене куçарать. Библи куçарас ĕçре те тăрăшать автор. Унăн произведенийĕсенче тăван çĕрĕн илемĕ, чăвашăн йăли-йĕрки, ĕмĕчĕ-шухăшлавĕ палăрса тăрать. Тутар республикинче çуралса ӳснĕ пулин те П. Афанасьев Шупашкар хулине юратса хула гимне çырма тивĕçлĕ пулнă.*

# ÇĂЛ ЧАВАТПĂР

Çăл чаватпăр, шыв шыратпăр.
Кунĕ шăрăх, тарăхатпăр.
Тепĕр сий илсессĕнех
Çăл тапса тухас пекех.
Анчах шывĕ курăнмасть.
Пăрахар ĕçе. Пулмасть.
Çук. Шырар-ха. Çăл чавар-ха,
Ял куллийĕ пулар мар-ха.
Антăхса та тарласа
Çăл чаватпăр ăмăртса.
Ак вăл çăл! Шарлаттарса
Тухрĕ кĕмĕллĕн тапса.
Шыв шыратпăр. Шыв тупатпăр,
Ĕç ăннишĕн савăнатпăр.
Килĕр, ĕçĕр! Шăрăхра
Кăшт пусарăр чунăра.

*П. Афанасьев*

## Словарь ĕçĕ

**Çăл** — колодец
**Чав** — копать, рыть
**Сий** — слой
**Ял кулли** — смехота, посмешище

**Ĕç ăнни** — удаваться, получаться
**Шăрăх** — жара
**Чуна пусар** — успокоить душу
**Кĕмĕл** — серебро

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Шыв шыраса автор юлташĕсемпе мĕн тăвать?
2. Вĕсем мĕншĕн тарăхаççĕ (савăнаççĕ)?
3. Автор вулакана мĕн тума чĕнет? Чĕнӳ йĕркисене тупса вуласа парăр.
4. «*Ял куллийĕ пулар мар-ха*» тенине мĕнле ăнланатăр?
5. Эсир çăл чавнине курнă-и? Мĕншĕн хула çыннисем çăл е çăлкуç шывне ытларах кăмăллаççĕ?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Сăвăра автор мĕнле проблема хускатнă?

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр, илемлĕ вулама вĕренĕр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнне мĕнле термин пытаннă-ши?*

**…** — это небольшое по объему произведение, созданное по законам стихотворной речи, выражающее душевное переживание.

**…** — ятарлă ритмпа палăрса тăракан текст.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен чăвашлипе вырăслин тӳр килĕвĕсене тупăр.*

1. Ĕçле, ĕçле, ĕçле çи, ĕçлемесен ан та çи.
2. Ĕçрен куç хăрать те, алă тăвать.
3. Ĕçрен ан хăра — вăл хăй санран хăратăр.
4. Ӳркенмен ăста пулнă.
5. Чĕлхепе мар, ĕçпе мухтан.

1. Хвались не языком, а — делом.
2. Только опыт создает настоящего мастера.
3. Кто не работает — тот не ест.
4. Глаза боятся, а руки делают.
5. Дело мастера боится.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Çак икĕ çăл хушшинче мĕнле пĕрпеклĕх тата уйрамлăх пур? Вырăс халăх юмахĕнче çăлтан кама туртса кăлараççĕ-ха? Юмах ятне, геройсене аса илĕр. Тен, притча астăватăр? Чăвашсен ун пек юмахсем, притчăсем пур-и?





# ĂÇТА КĂНА АН ÇИТ, ТĂВАН ÇĔР-ШЫВА АСРА ТЫТ — МНОГО СТРАН ПРОШЕЛ, А ДОБРО ЛИШЬ НА РОДИНЕ НАШЕЛ

**Ваçлей Давыдов-Анатри**
**(1917-2010)**



***Василий Иванович Давыдов-Анатри*** *– чăвашсен паллă поэчĕ. Поэт 50 кĕнеке ытла пичетлесе кăларнă. Чăваш композиторĕсем унăн сăввисемпе пилĕкçĕр юрă, юрăпа ташă сюитисем, ораторисемпе кантатăсем, опера çырнă. Поэтăн чи паллă кĕнекисем: «Пĕчĕк туссем», «Чĕре хушнипе», «Чеменпе Мерчен», «Илемпи», «Телейлĕ туслăх», «Шурăмпуç хăпарсан» т.ыт.те. Унăн произведенийĕсен тĕп тематики — тăван ен тата унăн сапăр та ĕçчен çыннисем.*

## МĔН-ШИ ВĂЛ ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ?

*Калав*

Тăван çĕр-шыв вăл — пирĕн атте-анне, ача чухне сиктернĕ сăпка, юратнă пиччепе аппасем, ырă кăмăллă шăллăмсемпе йăмăксем.

Тăван çĕр-шыв вăл — эпĕ ÿснĕ кил-çурт, юратнă тăван ялăм, хамăр умри ем-ешĕл çăкасемпе хурăнсем.

Тăван çĕр-шыв вăл — эпир çырлана çÿренĕ пурак, савăт-сапа, пÿрт умĕнче юрă шăрантаракан шăнкăрчă.

Тăван çĕр-шыв вăл — атте-анне панă чĕлхемĕр, эпир юратса юрлакан юрăсем.

Тăван çĕр-шыв вăл — ял çумĕнчен пуçланакан уй-хир, улăх-çаран, чечексем çинче сĕрлекен вĕлле хурчĕсем, эпир вылякан теттесем, хĕлле ярăннă тăвайкки.

Мĕнле илемлĕ, пуян та тараватлă пирĕн таврари çĕр-шыв! Шăнкăр-шăнкăр юхан шывсем, йăлтăр-йăлтăр кÿлĕсемпе ешĕл улăхсем, тинĕс евĕр курăнакан тыр-пул уйĕсем…

*В. Давыдов-Анатри*

### Словарь ĕçĕ

**Сăпка** — колыбель
**Улăх-çаран** — луг
**Тинĕс** — море
**Пурак** — лукошко, туесок
**Вĕлле хурчĕ** — пчела
**Шăнкăр-шăнкăр** — подражание журчанию воды

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв? Калаври сăмахсемпе усă курса кластер çырăр.

2. Таврари çĕр-шыв илемлĕ, пуян та тараватлă пулнине автор мĕнле тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать? Çав вырăна тупса вуласа парăр.

### Хăвăра тĕрĕслĕр

Васлей Давыдов-Анатри пултарулăхĕ ăçта палăрнă?

### Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен чăвашлипе вырăслин тӳр килĕвĕсене тупăр.*

1. Тăван кĕтес хăй патнех туртать.
2. Ăçта кăна ан çит, Тăван çĕр-шыва асра тыт.
3. Тăван йăваран хакли нимĕн те çук.
4. Кашни кайăк хăй йăвине савать.

а. Всякий кулик свое болото хвалит.
ă. Своя земля — свой прах.
б. Нет ничего дороже родного гнезда.
в. Много стран прошел, а добро лишь на Родине нашел.

## Александр Галкин



### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Мĕн вăл юптару?
2. Эсир мĕнле юптарусем вуланă? Вĕсене кам çырнă?
3. Эсир А.А. Галкинăн хăш юптарăвне вуланă? Вăл мĕн ятлă? Автор унта мĕнле проблема хускатнă?

## ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ ТЕСЕССĔН

Тăван çĕр-шыв тесессĕн
Куç умне
Тухать хĕвеллĕ, янкăр çуркунне:
Тăрăлтарать тăри çӳл тӳпере,
Шăнкăртатать шыв-шур сĕвеклĕхре, —
Унтан пахи мĕн пултăр тĕнчере?

Тăван çĕр-шыв тесессĕн
Куç умне
Тухать çу кунĕ: тулăх хир, ĕшне…
Тăрăслатса сикеççĕ путексем,
Ĕçе тухаççĕ юрласа хĕрсем, —
Çак мар-и вăл хитрелĕх, тăвансем?

Тăван çĕр-шыв тесессĕн
Куç умне
Тухать сап-сарă тумлă кĕркунне:
Тӳпеленет тыр-пулă пӳлĕмре,
Çĕн çăкăр пăсланать кĕрекере, —
Унтан хакли мĕн пултăр тĕнчере?

Тăван çĕр-шыв тесессĕн
Ман ума
Тухать ăсан сассиллĕ сĕм вăрман:
Вĕр çĕн юра тĕрлеççĕ куянсем,
Кĕтĕвĕпе çӳреççĕ пăшисем…

*А. Галкин*

## Словарь ĕçĕ

**Сĕвеклĕх** — пологий склон
**Кĕреке** — застолье
**Кĕтӳ** — стадо
**Ĕшне** — поляна
**Ăсан** — тетерев
**Çĕн çăкăр** — хлеб нового урожая

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр, 2 куплетне пăхмасăр калама вĕренĕр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Тăван çĕр-шыв тесен авторăн куçĕ умне мĕн-мĕн тухса тăрать?
2. Авторшăн мĕн-ши вăл пахалăх (хитрелĕх)?
3. Сăвва тĕрĕс интонаципе вулама хăш йĕркесем пулăшаççĕ?
4. Сăвва вуланă хыççăн сирĕн умăра мĕнле ӳкерчĕк тухса тăрать? Каласа парăр.
5. Сăввăн содержани тăрăх юлташусене ыйтусем парăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Сăвăра евĕрлев сăмахĕсенчен пулнă глаголсене тупăр. Вĕсем мĕнле евĕрлев сăмахĕсенчен пулнă? Автор çак глаголсемпе усă курса вулакана мĕн каласшăн пулнă-ши?

## Пултарулăх ĕçĕ

*Элли Юрьевăн «Шупашкар» картинипе паллашăр, ыйтусемпе усă курса ун тăрăх текст тăвăр.*

1) Картинăра автор мĕне сăнланă?
2) Хула мĕнле юхан шыв хĕрринче ларать?
3) Картинăра мĕнсем куратăр? Вĕсене автор мĕнле тĕссемпе усă курса ӳкернĕ?

4) Шупашкар мĕнле — çамрăк-и, ватă-и?
5) Картинăна хальхи Шупашкарпа танлаштарсан эсир мĕнле уйрăмлăхсем куратăр?
6) Картина ятне улăштарас пулсан, эсир ăна мĕнле ят панă пулăттăр?



## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен пуçламăш пайне тупса палăртăр:*

…………., Тăван çĕр-шыва асра тыт.
………….. хăй йăвине саватъ.
…………..., ют çĕршыв – ама çури.

## Пултарулăх ĕçĕ

*Интернет усçлăхĕнчен Элли Юрьев çинчен информаци тупăр, каласа пама хатĕрленĕр.*

**Юрий Петров (Вирьял)**
**(1936-1993)**



***Юрий Петрович Петров (Вирьял)*** *— чăваш поэчĕ. Вăл ача-пăча валли чылай произведени çырнă: «Кĕнеке», «Урокра», «Çырмари концерт», «Янрать усланкă», «Çĕрлехи çулçӳрев», «Уйăпсем», «Кăвакал кӳлли» тата ыт. те. Çавăн пекех тĕрлĕ халăх поэзине чăвашла куçарнă.*

*Пейзаж лирики, халăхсен хушшинчи туслăх, ачасене вĕрентес, ăс парас, çут çанталăк çураçулăхĕ – тĕп темăсем пулса тăраççĕ Юрий Петров хайлавĕсенче.*

## ÇĔР ПИН ЮРĂ ÇĔР-ШЫВĔ

«Чĕвĕлти чĕкеçсем» ушкăн капитанĕ:
Сĕм вăрман, ылтăн хир, Атăл шывĕ,

Тĕрлĕ халăх кунта пурăнать.
Чăваш çĕрĕ — юратнă çĕр-шывăм
Çулсерен çĕнелсе улшăнать.

Ман çĕр-шыв — çĕр пин юрă çĕр-шывĕ,
Калаçать вăл çĕр пин сăмахпа.
Ун çĕр пин тĕррине эс куç хывăн
Чи илемлĕ таса туйăмпа.

«Çамрăк çеçпĕлсем» ушкăн капитанĕ:
Ман çĕр-шыв — чăн юмах çĕрĕ-шывĕ,
Иксĕлми вăй-хăватлăн сывлать.
Вăл ÿстернĕ çунатлă хĕр-ывăл
Çăлтăрсем патнелле çул хывать.

Ман çĕр-шыв — тус-тăванлăх çĕр-шывĕ,
Чапĕ ун хĕвел пек ялтăрать.
Улăп евĕр эпир паттăр, сывă,
Ырă ĕмĕт мала йыхăрать.

*Ю. Петров*

## Словарь ĕçĕ

**Çĕр пин тĕрĕ** — сто тысяч вышивок
**Чап** — слава, величие
**Иксĕлми вăй-хăват** — неиссякаемая сила
**Ĕмĕт** — мечта
**Улăп** — Улып, чувашский богатырь

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Илемлĕ вулама вĕренĕр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Чăваш çĕрĕ мĕнле? Вăл мĕнпе пуян?
2. Чăваш çĕрĕнче мĕнле-мĕнле халăх пурăнать?
3. Автор мĕншĕн Чăваш çĕрне *«çĕр пин юрă çĕр-шывĕ» («юмах çĕрĕ-шывĕ», «тус-тăванлăх çĕр-шывĕ»)* тесе палăртать?
4. *«Вăл ÿстернĕ çунатлă хĕр-ывăл*
   *Çăлтăрсем патнелле çул хывать»*, — тенине мĕнле ăнланатăр? Чăваш çĕрĕн миçе космонавт? Камсем?
5. Сăвва мĕншĕн «Çĕр пин юрă çĕр-шывĕ» тесе ят панă?
6. *«Чĕвĕлти чĕкеçсем»* ушкăн капитанĕ, *«Çамрăк çеçпĕлсем» ушкăн капитанĕ* тет те автор пĕтĕмлетÿ туса икĕ пăнчă лартать. Çакăнпа автор мĕн каласшăн пулнă-ши? Ăнлантарса парăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Хăй вăхăтĕнче И.Я. Яковлев «Чăвашăн çĕр пин сăмах, çĕр пин тĕрĕ, çĕр пин юрă» тесе палăртнă. Эсир И.Я. Яковлев каланине мĕнле ăнланатăр?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Икĕ юпари сăмах майлашĕвĕсене çыхăнтарса ваттисен сăмахĕсем йĕркелĕр.*

1. Ăçта кăна ан çит, ………..
2. Тăван çĕр-шыв ăшши …...
3. Тăван çĕр-шывра ………..
4. Кашни кайăк …………….
5. Тăван çĕр-шыв — анне,….

а. хĕвел те ăшăрах.
ă. хăй йăвине сават.
б. ют çĕршыв — ама çури.
в. Тăван çĕр-шыва асра тыт.
г. ĕмĕр тăршшĕ.

### Константин Ушинский
### (1824-1870)



*__Константин Дмитриевич Ушинский__ – вырăссен паллă вĕрентӳçи, çыравçи. Ачасем валли питĕ нумай ĕç çырать вăл. Кĕçĕн класс ачисене вырăс чĕлхипе вĕрентме икĕ пайран тăракан «Ачасен тĕнчи» ятпа хрестомати, класс тулашĕнче ĕçleme «Тăван сăмах» кăларать. Çавăн пекех икĕ томлă «Çын - воспитани объекчĕ» кĕнеке çырса хатĕрлет. К. Ушинский произведенийĕсем пурнăçра мĕнлерех пулмаллине, хамăра еплерех тытмаллине кăтартаççĕ, ӳркенлĕхе питлеççĕ, çут çанталăка хисепleme, юратма вĕрентеççĕ. Паллăрах произведенийĕсем: «Вaçук», «Хĕвелпе çил», «Ачасем ращара», «Икĕ качака путекки», «Асатте», «Икĕ сухапуç», «Тăрнапа хур кайăк», «Çуркунне» тата ыт. те. Калавĕсемпе юмахĕсенче чĕр чунсене калаçтарать, ачасене йывăç-курăксем урлă воспитани парать, тĕрĕслĕхе вĕрентет.*

## ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ — ПИРĔН АННЕ

*Калав*

Хамăр пурăнакан çĕр-шыва эпир Тăван çĕр-шыв тетпĕр, мĕншĕн тесен унта пирĕн аттесем, асаттесем пурăнаççĕ.

Эпир çав çĕр-шывра çуралнă, унта пирĕн тăван чĕлхепе калаçаççĕ. Çав çĕршывра пире пурте çывăх.

Эпир хамăр çĕр-шыва анне тетпĕр, мĕншĕн тесен вăл пире хăйĕн çăкăрĕпе тăрантарса ӳстернĕ, хăйĕн сиплĕ шывне ĕçтерсе çитĕнтернĕ, хăйĕн чĕлхине юратма вĕрентнĕ. Вăл пире, анне пекех, яланах тăшмансенчен сыхлать.

Тĕнчере пирĕн çĕр-шывсăр пуçне тĕрлĕ патшалăхсемпе çĕрсем татах та нумай. Этемĕн тăван амăшĕ пĕрре кăна, тăван çĕр-шывĕ те унăн пĕрре çеç.

*К.Ушинский*

## Словарь ĕçĕ

**Çывăх** — близко
**Тăшман** — враг
**Этем** — человек
**Сиплĕ** — полезный
**Патшалăх** — государство

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сирĕншĕн мĕн вăл Тăван çĕр-шыв?
2. Эсир пурăнакан çĕр-шыв мĕн ятлă?
3. Мĕншĕн çыравçă Тăван çĕр-шыва аннепе танлаштарать? Автор çакна мĕнле ăнлантарать?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Калавăн темине палăртăр.
2. Тăван çĕр-шыв çинчен çырнă хайлавсене аса илĕр, авторĕсене палăртăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене чăвашла куçарăр е тӳр килекен чăвашла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

Нет ничего дороже родного гнезда.
Родина — мать, чужбина — мачеха.
Своя земля — свой прах.
Много стран прошел, а добро лишь на Родине нашел.

# КАШНИ КАЙĂК ХĂЙ ЙĂВИНЕ САВАТЬ — ВСЯКИЙ КУЛИК СВОЕ БОЛОТО ХВАЛИТ

## Петĕр Хусанкай
## (1907-1970)



*Петр Петрович Хусанкай — сăвăç, литературовед, публицист, тăлмач. Вăл пăтăм пурнăçне тăван халăхăмăра халаллана. Унăн вилĕмсĕр «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» сăвви халĕ те чăваш халăхăн асĕнче. Петĕр Хусанкай пĕтĕмпе 50 кĕнеке ытла пичетлесе кăларнă. Вĕсенчен 15 вырăсла тухнă. Унăн нумай кĕнеки чикĕ леш енче те тухнă. Поэтăн вăрçă вăхăтĕнче çырнă сăвви-поэмисем ачасемпе çамрăксен йывăр пурнăçне, паттăрла ĕçĕсене сăнласа параççĕ. П. Хусанкай пултарулăхĕнче чăваш чĕлхине упрасси, ăна малалла аталантарасси, тăван çĕре юратасси тĕп темăсем пулса тăраççĕ.*

## ЭП — ЧĂВАШ АЧИ

Эп — чăваш ачи, саватăп
Хамăрăн Чăваш çĕрне.
Вăл — кипке те ман, сăпка та,
Ăна манмăп ĕмĕрне.
Хумханать-и аслă Атăл,
Каш кашлать-и сĕм вăрман —
Савнă çĕрĕм-шывăм ман вăл,
Сас парать мĕн авалтан.

Эп — чăваш ачи, саватăп
Ĕмĕрхи Шупашкара.
Халь вăл çӳллĕ те, паха та,
Тек лармасть лупашкара.

Шупашкар вăл — манăн шанчăк,
Çутă ĕмĕт, аслă шкул.
Вĕренсе тухсан аванччĕ,
Аслă пулĕччĕ ман çул.

Эп — чăваш ачи, саватăп
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхене.
Юратап сăвва-юрра та
Купăса та кĕслене.
Юрататăп вуламашкăн
Чăвашла та вырăсла.
Ик чĕлхе вăл — ик ăс маншăн.
Эп пуласшăн ик ăслах.

*П. Хусанкай*

### Словарь ĕçĕ

**Кипке** — пеленка
**Вăрман кашлать** — лес шумит
**Сас парать мĕн авалтан** — старина моейродины эхом отзывается
**Лупашкара** — в яме, в низине
**Шанчăк** — надежда
**Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхе** — нежный язык
**Купăс** — гармонь
**Кĕсле** — гусли

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Чăваш ачи мĕне-мĕне саватъ? Тупса вулăр.
2. Чăваш çĕрĕ çинчен сăвăра мĕн каланă?

3. Чăваш ачи мĕншĕн Шупашкара сават?
4. Чăваш ачи хăш-хăш чĕлхесемпе вулама юратать? Мĕншĕн?
5. Сăвăра евĕрлев сăмахĕсене (подражательные слова) тупăр. Вĕсем мĕне евĕрлеççĕ? Автор вĕсене мĕн тĕллевпе усă курнă-ши?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле термин пытаннă-ши?*

**…** — главная мысль о том основном круге явлений, которые изображены в этом произведении.
**…** — хайлавăн тĕп шухăшĕ.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. *«Шупашкар тек лупашкара лармасть»* тенине мĕнле ăнланатăр?
2. Çак йĕркесене хăвăр сăмахсемпе ăнлантарса парăр: *«Ик чĕлхе вăл — ик ăс маншăн, Эп пуласшăн ик ăслах»*. И.Я. Яковлев сăмахĕсемпе çирĕплетĕр.

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Вулавра Чăваш çĕрне, Шупашкара, тăван чĕлхене юратнине палăртăр. Сăвва пăхмасăр калама вĕренĕр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмах лартса ваттисен сăмахĕсене вулăр.*

| | | |
|---|---|---|
| 1. | Кашни кайăк хăй … сават. | Тăван çĕре |
| 2. | Тăван йăваран … нимĕн те çук. | йăвине |
| 3. | Çут çанталăк – … тăван кил. | патнех |
| 4. | Тăван кĕтес хăй … туртать. | хакли |
| 5. | Ăçта кăна ан çит, … асра тыт. | пирĕн |

## Пултарулăх ĕçĕ

*Ыйтусемпе усă курса «Чăваш республики — ман Тăван çĕр-шыв» ятлă калав тăвăр.*

1. Чăваш республики ăçта вырнаçнă?
2. Вăл мĕнсемпе пуян?
3. Вăрмансенче хăш чĕр чунсене курма пулать?
4. Чăваш çĕр-шывĕ урлă мĕнле-мĕнле юхан шывсем юхаççĕ?
5. Республикăра хăш халăх çыннисем пурăнаççĕ?
6. Чăваш республикин тĕп хули мĕн ятлă?

# ÇĂКĂРТАН АСЛИ ÇУК – ХЛЕБ – ВСЕМУ ГОЛОВА

## Васлей Давыдов-Анатри



***Василий Иванович Давыдов-Анатри*** *— поэт-юрăçă. Вăл ăста куçаруçă пулнине те палăртса хăвармалла. Çыравçă тутар поэчĕсен хайлавĕсене чăвашла куçарнă. Сăмахран, Муса Джалиль, Шаукат Галиев, Махмуд Хусаин сăввисем чăвашла та уçăмлăн тата çепĕççĕн янăраççĕ. В. Давыдов-Анатрин сăввисем яланах юрă евĕр ритмикăлла вуланаççĕ, чуна хумхатаççĕ, «Тăнăç пурнăç пултăр тĕнчере» лозунг унăн пĕтĕм пултарулăхĕпе йĕрленсе пырать. Поэта çĕр-шыври пăтăрмахсем, тĕрĕсмарлăхсем кулянтараççĕ.*

## АСЛИ ÇУК ÇĂКĂРТАН

Халăх ĕмĕр çапла шухăшлать:
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Ял ĕçченĕ хирте тар тăкать,
Уншăн чунĕ çунать ун ялан.

Тус-тăванăм, çакна эс ан ман:
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Пуç тайса хисепле эс ăна,
Вăй та пурнăç парать вăл сана.

Çăкăр вăл – çĕр аннемĕр парни,
Вăл пулсан эпир вăйлă, пуян.
Ĕçлĕ халăх ăна хаклани
Ĕмĕртен вăл пырать, авалтан.

Ачаран пултăр пирĕн асра:
Тĕпретме юрамасть çăкăра!
Пирĕн пурнăç хăвачĕ унра,
Унăн ячĕ ялан чи малта!

*В.Давыдов-Анатри*

### Словарь ĕçĕ

**Ĕмĕр** — век
**Пуç тай** — поклониться
**Хăват** — могущество, сила
**Тĕпрет** — крошить
**Тар тăк** — усердно трудиться
**Пурнăç хăвачĕ** — жизненная сила

### Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Автор шухăшне тĕрĕс уçса пама тăрăшăр. Илемлĕ вулама вĕренĕр.

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвă мĕн çинчен?
2. Ял ĕçченĕн чунĕ мĕншĕн ялан «çунать»?
3. «*Çăкăр вăл — çĕр аннемĕр парни*», — тет сăвăç. Эсир сăвăçпа килĕшетĕр-и?
4. Автор шучĕпе *«çăкăр пулсан халăх вăйлă та пуян»*? Эсир çакна мĕнле ăнланатăр?

5. Ҫăкăр ячĕ ăҫти вырăнта тăмалла? Мĕншĕн?
6. Ҫăкăра тĕрĕс хаклама пулăшакан сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсем тупăр. *Тĕслĕх:* ан тĕпрет, ан пăрах …
7. Мĕншĕн сăвăра глаголсем нумай? Автора вăл мĕн тума кирлĕ пулнă? Ăнлантарăр.

**Символ -** образ, выражающий смысл какого-либо явления в предметной форме.

**Символ** – ҫут ҫанталăк е япала сăнарĕ урлă, этем пурнăҫĕн, ĕҫĕ-хĕлĕн е шухăшĕн паллине сăнлакан нумай пĕлтерĕшлĕ куҫăмлă ăнлав.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Сăвăра автор мĕнле проблема хускатнă?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене вĕҫлĕр:*

1. Ҫăкăртан асли …
2. Ҫăкăр хырăм хыҫҫăн …
3. Ҫăкăр-тăвар …
4. Килекен ҫынна ҫăкăр …
5. Выҫсан хура ҫăкăр та …



**Василий Алентей**
**(1919 – 1989)**

***Василий Алентей (Василий Степагович Алендеев)*** *— чăваш халăх ҫыравҫи, сăвăҫă, куҫаруҫă, ҫивĕч критик. Вăл ача-пăча валли чылай хайлав ҫырнă. Унăн хайлавĕсен тематики — ҫăкăр хакĕ, тăван ҫĕр-шыва юратни, ҫут ҫанталăк илемĕ, вăрҫă ахрăмĕ. Чи паллă кĕнекисем: «Салтак чĕри», «Вĕлле хурчĕ — ылтăн хурт», «Хирте вĕршĕнсем вĕҫеҫҫĕ», «Хĕрлĕ кĕпе».*

## ҪĂКĂРТАН АСЛИ ҪУК

*Калав*

Ҫăкăр вăл — пирĕн пурнăҫ, халăх пуянлăхĕ. Ҫăкăртан асли ҫук теҫҫĕ ваттисем. Ҫăкăр авалтанах халăхра пысăк хисепре пулнă. «Умăнтан ҫăкăр ан татăлтăр», — тенĕ ҫынсем пĕр-пĕрне ырă сунса. Паян кун та эпир пысăк хăнасене ҫăкăр-тăварпа кĕтсе илетпĕр.

Ĕлĕкхи вăхăтра ҫăкăршăн хресчен тем чул асап тӳснĕ. Чăвашсен ҫĕр хĕсĕк пулнă. Тырпул тухăҫĕ пысăк пулман. Хĕрарăмсене ҫĕр паман. Чухăнсен Ани-ҫаранне пуянсем турта-турта илнĕ. Тăварлă куҫҫульпе, вĕри тарпа йĕпеннĕ ун чухне ҫăкăр татăкĕ.

Йывăр вăхăтра çăкăр хакĕ уйрăмах палăрать. Иртнĕ вăрçăра эпĕ Ленинграда хӳтĕлесе çапăçрăм, тăшман ункинче пултăм. Ленинград çыннисем çавăн чухне выçăпа вилни çинчен илтнĕ ĕнтĕ эсир, ачасем. Мана та вăл асапа курма тиврĕ. Талăкра виççĕр грамм çăкăрпа пурăнаттăмăр.

Халĕ пирĕн çĕр-шывра çăкăр çителĕклĕ. Унăн хакĕ те йӳнĕ. Ку вăл пирĕншĕн чăннипех те пысăк телей. Анчах тепĕр чухне çăкăра хисеплеменнине те курма пулать. Ку вара чун-чĕрене питех те тарăхтарать. Çăкăра хисеплемен çынран ыррине ан кĕт тенĕ халăхра авалах. Çакна, хаклă ачасем, нихçан та ан манăр. Кашни çăкăр чĕллиех — хĕвел шевли, ăшă çумăрăн кĕмĕл тумламĕсем, çуллахи тӳлек çил кĕвви. Кашни çăкăр чĕллинчех ял ĕçченĕсен канăçсăр ĕçĕ-хĕлĕ, вăй-халĕ. Тыр-пул çитĕнтерсе мĕнпур халăха тăрантаракан çын вăл — чăн-чăн Улăп паттăр, тĕнчери чи хисеплĕ çын.

*В. Алентей*

## Словарь ĕçĕ

**Халăх пуянлăхĕ** — народное богатство
**Пысăк хисепре** — в большом почете
**Ырă сун** — желать добро
**Ĕлĕкхи вăхăтра** — в старину
**Хĕсĕк** — тяжелый, трудный
**Выçăпа вилнĕ** — умирали от голода
**Çителĕклĕ** — достаток
**Тарăхтарать** — злит

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Ĕлĕкхи вăхăтра тырпул тухăçĕ мĕнле пулнă? Мĕншĕн?
2. Çынсем пĕр-пĕрне ырă сунса мĕн каланă?
3. Пысăк хăнасене мĕнпе кĕтсе илеççĕ?
4. Тăшман ункине лекнĕ Ленинград çыннисен çăкăр çителĕклĕ пулнă-и?
5. Автор иртнĕ вăрçăра тăшман ункине лекни калавăн хăш йĕркисенче палăрать? Тупса вулăр.
6. Халĕ пирĕн çĕр-шывра çăкăр хакĕ мĕнле?
7. Кам вăл тĕнчери чи хисеплĕ çын?
8. Мĕншĕн автор тĕнчери чи хисеплĕ çынна Улăппа танлаштарать?
9. *«Çăкăр вăл — пирĕн пурнăç»* тенине мĕнле ăнланатăр?
10. Çыравçăн сĕнĕвĕ *«Çăкăра упрани — çĕр-шыва сыхлани»* текен ваттисен сăмахĕпе мĕнле çыхăнса тăрать?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Вуланă калавăн темине палăртăр?
2. Василий Алентей Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине хутшăннă-и? Хутшăннă пулсан ăçта çапăçнă?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Чăвашла тата вырăсла ваттисен сăмахĕсен тӳр килĕвĕсене тупăр.*

1. Хура ҫăкăр ҫиекен хур курман.
2. Ҫăкăр — ҫĕр тĕрекĕ.
3. Ҫăкăр-тăвар хире-хирĕҫ.
4. Апатран аслă пулаймăн.
5. Ҫăкăр тутине ĕҫлекен пĕлет.

а) Вкус хлеба знает только крес–тьянин.
ă) Угощение должно быть взаим–ным.
б) Хлеб — всему голова.
в) Хлеб — опора земли.
г) Того не насытила беда, кто ел черный хлеб.

## Виталий Енĕш
## (1941)



*Виталий Енĕш (Виталий Григорьевич Григорьев)* — *ăста калавҫă. Вăл ача-пăча валли чылай хайлав ҫырнă. Чи паллă кĕнекисем: «Ҫакă ҫутă тĕнчере...», «Тĕнчери чи пĕчĕк патшалăх», «Чи маттурри – Урине», «Асаннĕр пур-и?».*

*Автора ача-пăча тĕнчи, вĕсен тавракурăмĕ, хăтланкаларăшĕ, ĕҫĕ-хĕлĕ интереслентернĕ. Ҫавăнпа та пулĕ вăл хăйĕн пĕчĕк калавĕсенче пурнăҫра пулса иртнĕ самантсене, чĕр чунсене, кайăк-кĕшĕке, вĕсен хăйне евĕр пурнăҫне илемлĕн сăнарласа пама тăрăшнă.*

## ҪĂКĂР — ҪĔР ТĔРЕКĔ
*Калав*

Ҫăкăр тесен тӳрех вăрҫă хыҫҫăнхи ҫулсем аса килеҫҫĕ. Питĕ йывăрччĕ ҫав ҫулсем…

Пĕррехинче анне шăллăмпа иксĕмĕре пĕрер татăк ҫăкăр касса пачĕ. Хамăн татăк шăллăм татăкĕнчен пĕчĕкрех пек туйăнчĕ мана. Ҫăкăра эпĕ ывăтса ятăм:

— Кун пек пĕчĕк татăка ҫийиччен ҫиместĕп те, — терĕм.

Атте ман ҫине сиввĕн пăхрĕ те:

— Халех сĕтел ҫине илсе хур, тăрлавсăр! — терĕ.

Ҫăкăр татăкне илнĕ хыҫҫăн хăй патне пыма хушрĕ.

— Эсĕ халь пĕчĕк мар. Виҫҫĕмĕш класа ҫӳретĕн ĕнтĕ, — сăмахĕсене татса каларĕ вăл. — Сан пек чух эпир акана ҫӳреттĕмĕр. Шкулта та вĕренеймерĕмĕр. Эсĕ вара ҫын аллипе тунă ҫăкăра та хаклама пĕлместĕн.

Атте сăнĕ ҫав-ҫавах ҫилĕллĕ:

— Ҫĕр чăмăрĕ мĕн ҫинче тытăнса тăрать, пĕлетĕн-и ҫавна?!

— Ҫĕр чăмăрĕ нимĕн ҫинче те тытăнса тăмасть, хăй орбити тавра ҫаврăнать, — терĕм эпĕ.

— Кĕнекери пек каласан апла тейĕпĕр-ха, — килĕшнĕ пек пулчĕ атте.

Унтан вăл шухăша путрĕ. Чылайран тин мана куҫран пăхса ҫапла хушса хучĕ:

— Ҫĕр нимĕнле орбита ҫинче те мар, калама ҫук пысăк ҫăкăр ҫинче тытăнса тăрать. Ҫăкăр пулмасан саншăн нимĕнле орбита та пулас ҫук.

Ҫӑкӑрсӑр эпир Ҫӗр мӗнне те пӗлеймен пулӑттӑмӑр. Ҫӑкӑр та, хӗвел шевли те, уҫӑ сывлӑш та, вӑй-хал паракан шыв та — ҫаксем пурте ҫынна пурӑнма кирлӗ япаласем. Ҫӑкӑр тесе эпӗ ҫӑкӑра кӑна каламастӑп. Ҫӑкӑр шутне пӗтӗм апат-ҫимӗҫ кӗрет. Ҫӑкӑр вӑл — Ҫӗр тӗрекӗ.

*В.Енӗш*

## Словарь ӗҫӗ

**Ҫӗр чӑмӑрӗ** — планета Земля
**Ҫилӗ** — гнев, ярость
**Хӗвел шевли** — солнечный лучик
**Ҫӗр тӗрекӗ** — опора Земли
**Татӑк** — кусок
**Сывлӑш** — воздух

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Калава кам каласа парать? (От чьего имени ведется рассказ?)
2. Автор мӗншӗн хӑйне панӑ ҫӑкӑр татӑкне ывӑтса янӑ?
3. Ашшӗ ывӑлӗ ҫине тарӑхни хӑш йӗркесенче палӑрать? Тупса вуласа парӑр.
4. Авторӑн ашшӗ шкулта вӗреннӗ-и? Мӗншӗн?
5. Авторӑн ашшӗ «*Ҫӗр чӑмӑрӗ ҫӑкӑр ҫинче тытӑнса тӑрать*», — тет. Эсир унпа килӗшетӗр-и?
6. Калава мӗншӗн «Ҫӑкӑр — Ҫӗр тӗрекӗ» тесе ят панӑ?

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

1. Калавра мӗнле проблема хускатнӑ?
2. Ҫӑкӑр ҫинчен мӗнле хайлавсем (произведения) пӗлетӗр? Каласа тухӑр.

## Пултарулӑх ӗҫӗ

*Станислав Алатовӑн «Пучахсем (йывӑр ҫулсем)» картинипе паллашӑр, ыйтусемпе усӑ курса ун тӑрӑх калаҫу тӑвӑр.*



1. Картинӑра камсене куратӑр?
2. Сирӗн шутпа, ку ҫынсем мӗншӗн уя тухнӑ?
3. Вӗсем мӗн тӑваҫҫӗ?
4. Пучах пуҫтарни ҫынсене йывӑр ҫулсенче выҫлӑхран ҫӑлнӑ-и?
5. Картинӑри ҫынсем ҫӑкӑр хакне пӗлеҫҫӗ-и?
6. Пучах Раҫҫейре мӗн символӗ шутланать?

*Усӑ курмалли сӑмахсем:* ҫӑлнӑ, пучах пуҫтараҫҫӗ, амӑшӗпе хӗрӗ, пӗлеҫҫӗ, выҫӑпа аптранӑ пирки.

# ÇЫНПА ÇЫН ТУСЛĂ ПУЛТĂР, ХАЛĂХПА ХАЛĂХ ТУСЛĂ ПУЛТĂР — ПУСТЬ ЧЕЛОВЕК С ЧЕЛОВЕКОМ ДРУЖИТ, А НАРОД – С НАРОДОМ



## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Мĕн вăл притча? Çак жанрпа ытларах мĕн тĕллевпе усă кураççĕ?
2. Эсир мĕнле притчăсем вуланă? Вĕсене кам çырнă?
3. Эсир Г. Волковăн хăш хайлавĕсене пĕлетĕр? Каласа тухăр.

## САЛМА ЯШКИ

*Калав*

Çĕр-шыв тăрăх таçта та çитрĕм. Пĕр çулĕнче Вăтам Ази тăрăх çӳрерĕм. Пĕррехинче мана каларĕç кăркăссем:

— Паян чăваш кунĕ пултăр. Чăваш апачĕ астивтер пире.

Чăвашăн салма яшки хĕрĕх тĕрлĕ тетчĕ асанне: кашăк салми, каснă салма, вĕтĕ салма, унаçлă салма, чăмăр салма, вăрăм салма…

Салма яшки яланах пĕр пулмасть. Кулленхи яшкана пĕçерме ансат. Хăнасем валли урăхла салма яшки пĕçереççĕ. Ăна салам яшки те, уяв яшки те теççĕ. Уяв салми валли çичĕ тĕрлĕ какай, çичĕ тĕрлĕ ӳсен-тăран, çичĕ тĕрлĕ юр-вар кирлĕ теççĕ.

Салма тума (унама) тытăнатăп. Çав вăхăтра юлташсем ман яшка валли шӳрпе хатĕрлеççĕ. Эп хушнипе çичĕ тĕрлĕ ӳсен-тăран çăмăллăнах тупрĕç. Хăшне-пĕрне килтенех илсе тухнă, ыттисене хам пуçтарнă: çерçи кĕпçи, ыраш кĕпçи, лавр çулçи, сухан, укроп, çĕр улми, помидор, пăрăç…

Çичĕ тĕрлĕ какая – чĕлхене, ӳпкене, пĕвере, чĕрене, пĕçе шăнăрĕпе юнашар «пылак какай» текен пая, пӳрене тата кăвакал какайне вĕтĕ туратăп та чӳлмеке тултарса кăвайт çине лартатăп. Пулас яшка хуранта вĕрет. Салмине яратăп. Салма çиеле хăпарсан тата пилĕк-ултă минут вĕрететĕп те — яшка хатĕр. Кваса, сиплĕ минерал шывне, сĕте, хăймана тата ыттине юр-вар тетпĕр.

Салма яшкине хам антарса паратăп. Кашниййĕн тирĕкне чӳлмекрен вичшер кашăк çичĕ тĕрлĕ какай яратăп. Вĕтĕ туранă укроппа ытти им-çама хурса паратăп.

Яшкана ырласа çиеççĕ ман кăркăс туссем.

— Туслăх яшки, — теççĕ. — Пур халăхăн та ĕçме-çиме хăйне евĕр çав. Чăваш салми мĕн тери паха иккен…

*Г. Волков*

## Словарь ĕçĕ

**Салма яшки** — суп с клецками
**Уна** — раскатывать
**Чӳлмек** — горшок, корчага
**Кăркăс** — киргиз
**Пĕвер** — печень
**Пӳре** — почки
**Ӳпке** — легкие
**Шăнăр** — жила, связка
**Им-çам** — специи

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Чăвашăн миçе тĕрлĕ салма яшки пулнă? Мĕнлисем? Вĕсен ячĕсене тетраде çырса хурăр.
2. Хăнасем валли пĕçерекен салма яшкине чăвашсем урăхла мĕн теççĕ?
3. Чăваш салмине хатĕрлеме мĕн-мĕн кирлĕ?
4. Сирĕн килте салма яшки пĕçереççĕ-и? Салма яшкисĕр пуçне тата мĕн-мĕн яшки пулать?
5. Мĕнле шутлатăр, мĕншĕн хăнасем валли пĕçерекен салма яшкине чăвашсем урăхла «*уяв яшки*» теççĕ?
6. «*Туслăх яшки*» тенине мĕнле ăнланатăр?

## Культурăсен çыхăнăвĕ

*Кашни халăхăн наци апачĕ пур. Аяларах панă апат-çимĕç ячĕсене эсир илтнĕ-и? Вĕсем хăш халăх çыннисен апат-çимĕçĕсем шутланаççĕ-ши?*

Полан лем, шӳрпе, плов, ишкембе

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр:*

Кайăк çуначĕсемпе вăйлă, ....
Çынпа çын туслă пултăр, ...
Туслăха укçалла ...
Тусу пулмасан – шыра, ...
Çĕр сум пуличчен …..
Шанчăклă тусăн …….

# КАМ ÇĔР–ШЫВА ЮРАТАТЬ,
# ВĂЛ ТĂШМАНА КУРАЙМАСТЬ —
# КТО ЛЮБИТ РОДИНУ, ТОТ НЕНАВИДИТ ВРАГОВ

**Александр Алка**
**(1913-1977)**



*__Александр Егорович Алка__ — чăвашсен паллă поэчĕ. Унăн хайлавĕсен тематики — ачасен ĕçченлĕхĕпе тăрăшулăхĕ, тăван çĕр-шыва юратни, çут çанталăк илемĕ, вăрçă ахрăмĕ. Чăваш композиторĕсем поэтăн сăввисем тăрăх нумай юрă кĕвĕленĕ, «Шывармань» легенда тата «Хамăрьялсем» поэма тăрăх Ф.Васильев композитор оперăсем çырнă. Ача-пăчасем А. Алкана «Чи савăнăçлă кун», «Çĕнĕ çул», «Мĕн лартмалла?», «Чи тутли», «Юр çунă», «Ылтăн кĕркунне» произведенисем тăрăх пĕлеççĕ.*

## МАЛТАНХИ КУН
*Калав*

1941 çул. Июнĕн 22-мĕшĕ. Сенкер пĕлĕт айĕнче ешĕл вăрмансем хумханмасăр ларнă. Ылтăн тырăллă хирсем, утă капанĕсемлĕ улăх-çарансем канлĕн сывланă. Ялсемпе хуласенче кун каçа ĕçлесе ывăннă çынсем, выляса ĕшеннĕ ачасем тутлăн çывăрнă. Çĕр хăй те тĕлеккĕн каннă. Хĕвелтухăçĕнчен çĕре ыйхăран вăратса шурăмпуç хăпарнă. Вăл сарăлнăçемĕн сарăлса пынă. Акă вĕçен кайăксем те юрă шăрантарма пуçланă.

Анчах сасартăк чикĕ енче, пĕр çич-сакăр çухрăмра, мăн тупăсем кĕрлеме пуçланă. Вĕсем, çĕрле масар çинче урнă йытăсем салхуллăн уласа вĕрнĕ пек, хулăн сасăпа кĕрленĕ.

Хыр вăрманĕ тăрринче моторсен сасси илтĕнсе кайнă. Уçланкă тĕлĕнчен, кăвак пĕлĕте хупласа, пысăк та хура самолетсем аялтанах вĕçсе иртнĕ. Виççĕ… улттă… вуннă… çирĕм… çĕр… Вĕсен шучĕ те пулман. Çуначĕсем айĕнче – тискер хĕрессем.

…Вăрçă пуçланнă.

*А.Алка*



### Словарь ĕçĕ

**Утă капанĕ** — стог сена
**Тупă** — пушка, орудие
**Тутлăн çывăр** — спать сладко
**Хĕвелтухăç** — восток
**Ĕшен** — уставать
**Масар** — кладбище
**Уçланкă** — поляна

## ЫЙтусемпе ĕçсем:

1. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи хăçан пуçланнă?
2. Лăпкă пурнăçа мĕнле сăмахсемпе сăнланă? Тупса вулăр.
3. Тупăсен кĕрлевне мĕнпе танлаштарнă?
4. Моторсен сасси ăçтан илтĕнсе кайнă?
5. Ăçтан пысăк та хура самолетсем вĕçсе иртнĕ? Вĕсен çуначĕсем айĕнче мĕнсем пулнă?
6. «Хĕвелтухăçĕнчен çĕре ыйхăран вăратса шурăмпуç хăпарнă» тенине мĕнле ăнланатăр?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

«Вăрçă» сăмахпа синквейн çырăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Панă сăмахсенчен ваттисен сăмахĕ пуçтарăр, вырăсла куçарăр.*

Чысна, çухатсан та, ан çухат, пуçна.

## Проект

Сирĕн тăвансем хушшинче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă çынсем пур-и? Вĕсем çинчен кĕскен каласа пама хатĕрленĕр е презентаци туса килĕр.

**Александр Тимбай**
**(1925-1999)**



***Александр Тимбай (Александр Вениаминович Тимофеев)*** *– поэт, журналист, прозаик. Вăл нумай çул хушши ачасене чăваш тата вырăс чĕлхисем вĕрентнĕ май литературăпа питĕ кăсăкланнă, сăвăсем, поэмăсем, калавсем çырнă. Автор хăйĕн произведенийĕсенче чăваш халăхĕн паттăрлăхне яр уççăн çутатать, вăрçа питлет, тăнăç пурнăçшăн кĕрешме чĕнет. Ачасем валли çырнă паллăрах кĕнекисем: «Вуникĕ асамçă», «Эс кăçăл шкула каятăн», «37 сас палли».*

### ХУРÇĂ ХĔР

Юр çăвать те, çил туллать,
Тĕксĕм пĕлĕт хупă.
Тăвăлпа пĕрле улать
Темиçе çĕр тупă.

Вут çĕлен пек хĕрлĕ йĕр

Выртрĕ пĕлĕт урлă:
Ку — «Катюша» — хурçă хĕр,
Вăл тăшманшăн — хурлăх.



Тăпачпа йĕтем çинче
Авăн çапнă евĕр
Тÿнкĕр-тÿнкĕр! мал енче
Савăнса итлетпĕр.

Хурçă мина çурăлать —
«Катя» кучченеçĕ.
Пирĕн «хĕр» çапла юрлать,
Çавăн пек ун ĕçĕ.

*А. Тимбай*

## Словарь ĕçĕ

**Хурçă хĕр** — стальная девушка
**Вут çĕлен** — пожар
**Тăвăлпа пĕрле ула** — воет с бурей
**Йĕтем** — гумно
**Тăпачпа авăн çап** — молотить цепами
**Тупă** — орудие, пушка
**Кучченеç** — гостинец

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвăра мĕнле хĕр çинчен сăмах пырать? Хурçă хĕре урăхла мĕнле калаççĕ?
2. Çил тулланине мĕнпе танлаштарнă? «Катюша» сасси мĕн евĕр илтĕнет?
3. Хурçă хĕр тăшманшăн мĕнлерех-ши?
4. Салтаксем çак хĕç-пăшала юратнине сăвăри хăш йĕркесемпе çирĕплетме пулать? Тупса вулăр.
5. Сăвва мĕншĕн «Хурçă хĕр» тесе ят панă?
6. Эсир «Катюша» çинчен мĕн пĕлетĕр? Каласа парăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Александр Тимбай мĕнле жанрта палăрнă?
2. Вăл ытларах мĕн çинчен çырнă?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене чăвашла куçарăр е тÿр килекен чăвашла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

1. Герои рождаются в бою.
2. Береги честь смолоду.
3. Кто любит Родину, тот ненавидит врагов.

## Юрий Сементер
## (1941)



***Юрий Сементер (Юрий Семенович Семенов)*** *– чăваш халăх поэчĕ. Паллăрах произведенийĕсем: «Тупа», «Аван-и, салтак», «Чĕнтĕрлĕ кĕпер», «Хуркайăк çулĕ», «Хушка», «Сехетсен çĕр-шывĕнче» тата ыт. те. Хайлавĕсен тематики питĕ анлă унăн: пейзаж лирики, чĕр чунсен тĕнчи, ачасен шухăшлавĕпе ĕмĕт-тĕллевĕ, тăван чĕлхене упрасси, паянхи кунри лару-тăру. Анчах та пуринче те тенĕ пекех хăйне евĕрлĕ чĕлхе палăрса тăрать: ваттисен сăмахĕсемпе тата каларăшĕсемпе усă курни, чĕрĕ мар чунсемпе калаçни, истори çине таянни.*

## КАЛАÇУ

— Атте, пит сивĕ-çке паян,
Çил уççинче кăштах тăрсан
Юр кĕлетке пулса ларан…
— Çапла. Анчах та салтаксем
Хăйсен посчĕсенчех тăраççĕ.
Сыхлаççĕ çĕр-шыва вĕсем,
Пĕри те ăшă шырамаççĕ.

— Атте, ытла та шăрăх-çке паян,
Вĕри хăйăр çине выртсан
Ӳтӳ кĕç кăвăрчланĕ сан…
— Çапла. Анчах та салтаксем
Хăйсен посчĕсенчех тăраççĕ.
Сыхлаççĕ çĕр-шыва вĕсем,
Пĕри те сулхăн шырамаççĕ.

— Атте, сив çумăр ислетет паян,
Тăкать пуль тĕпсĕр каткаран —
Тухан кăна — лачкам пулан.
— Çапла. Анчах та салтаксем
Хăйсен посчĕсенчех тăраççĕ.
Сыхлаççĕ çĕр-шыва вĕсем,
Пĕри те хӳтлĕх шырамаççĕ.

Ю. Сементер

### Словарь ĕçĕ

**Вĕри хăйăр** — горячий песок
**Катка** — бочка
**Кăвăрчлан** — превращаться в шкварки, вытопки
**Лачкам пул** — весь мокрый
**Хӳтлĕх** — защита
**Сулхăн** — тень

### Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Рольпе палăртуллă вулама вĕренĕр.

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвăра камсем хушшинче калаçу пырать?
2. Кун пек калаçу формине мĕн теççĕ? Эсир тата мĕнле калаçу формисене пĕлетĕр?
3. Ашшĕпе калаçаканни, сирĕн шутпа, ар çын ача-и е хĕр ача-и?
4. Çарта тăракан салтаксем çинчен сăвăра мĕн каланă? Тупса вулăр.

5. Сăвă мĕнле пулма вĕрентет? *Малалла тăсăр:* хăюллă (çирĕп, чăтăмлă…) пулма вĕрентет.
6. Çирĕп характерлă пулас  тесен шкул ачин мĕн тумалла-ши?

## ВĔРЕННИНЕ ПĔТĔМЛЕТНИ

1. *Тупмалли юмахсен тупсăмĕсене пĕлĕр.*

Алăсăр, урасăр — алăк уçать (…).
Мана пурте кĕтеççĕ — эпĕ тухатăп та, тарса пытанаççĕ (…).
Пĕлĕт çинче илемлĕ хĕр çӳрет (…).
Пĕчĕк çеç кинĕм пур, пин хут кĕпе тăхăнать (…).
Пĕчĕк кăна аппа пур, куçран пăхсан макăртать (…).
Юхать, юхать — юхса пĕтеймест, чупать, чупать — чупса çитеймест (…).

2. *Николай Овчинников картинин тĕрĕс ятне палăртăр:*

1) И.Н.Ульянов тата И.Я. Яковлев.
2) И.Н.Ульянов тата И.Я. Яковлев чăваш шкулĕнче.
3) Чăваш шкулĕнче.
4) И.Я. Яковлев чăваш шкулне килни.



3. *Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.*

1) Çăкăр тесен тӳрех вăрçă (а) _______ çулсем аса килеççĕ. Питĕ (ă)_________ çав çулсем…

Пĕррехинче анне шăллăмпа (б)_________ пĕрер татăк çăкăр касса пачĕ. Хамăн татăк шăллăм татăкĕнчен (в)_________ пек туйăнчĕ мана. Çăкăра эпĕ (г)_______ ятăм:

— Кун пек пĕчĕк татăка çийиччен çиместĕп те, — терĕм.

Атте ман çине (д)_______ пăхрĕ те:

— Халех сĕтел çине илсе (е)_______, тăрлавсăр! — терĕ.

*(В. Енĕш «Çăкăр  —çĕр тĕрекĕ» калав сыпăкĕ)*

*Суйламалли вариантсем:*
а) хыҫӗнчи, пек, хыҫҫӑнхи, патӗнчи, валли.
ӑ) хаяр, ҫӑмӑл, хаяр, усал, йывӑрччӗ.
б) виҫӗмӗре, иксӗмӗре, виҫҫӗн, иккӗн, тӑватсӑмӑр.
в) пӗчӗкрех, пысӑкрах, сарлакарах, вӑрӑмрах, ҫӳллӗрех.
г) парса, юрласа, ывӑтса, чупса, ташласа.
д) сиввӗн, ӑшшӑн, ҫӑмӑллӑн, майӗпен, татӑклӑн.
е) пӑрах, ил, хур, вырт, тӑр.

2) Пӗр ҫын мӗн ачаранпах ухмахла (а) _______ та суйма юратнӑ тет. Пӗррехинче ирхине (ӑ)_________ сасӑпа:

— Кашкӑр! Кашкӑр! — тесе (б)_________ ячӗ тет.

Акӑ ун патне в)_________ чупса та ҫитеҫҫӗ. Пӑхаҫҫӗ: нимӗн те ҫук. Ҫынни вара хӑй г)_______ кулса ларать тет.

*(Г. Волков «Суяпа инҫе каяймӑн» притча сыпӑкӗ)*

*Суйламалли вариантсем:*
а) калаҫма, шӳт тума, юрлама, выляма, юрӑ юрлама.
ӑ) хаяр, хитре, вӑйлӑ, мӑнӑ, ҫинҫе.
б) кулса, выляса, ташласа, кӑшкарса, юрласа.
в) кӳршӗ-аршисем, йӑмӑкӗсем, юлташӗсем, ачисем, тӑванӗсем.
г) савӑнса, юрласа, ыталаса, ахӑлтатса, кӑшкӑрса.

4. *Сӑвва вуласа тухӑр, темине палӑртӑр.*

1) Ҫӗлӗк хывмасӑр
Ҫӑкӑр ан тыт:
Ҫӑкӑртан асли ҫук. *(П.Эйзин)*

2) Килчӗ ырӑ ҫуркунне,
Килчӗ, ячӗ ӑшӑтса.
Хӗвел савать тӗнчене
Хӗл ыйхинчен вӑратса. (К. Иванов)

5. *Ҫак йӗркесен авторӗсем камсем?*

1) Ҫавӑнпа кун-ҫул илемлӗ,
Ҫавӑнпа эпир телейлӗ, —
Тавтапуҫ сана, учитель,
чӗререн.

2) Тӑван ҫӗршыв тесессӗн
Куҫ умне
Тухать хӗвеллӗ, янкӑр ҫуркунне:
Тӑрӑлтарать тӑри ҫӳл тӳпере,
Шӑнкӑртатать шыв-шур
сӗвеклӗхре, —
Унтан пахи мӗн пултӑр тӗнчере?

3) Эп — чӑваш ачи, саватӑп
Хамӑрӑн Чӑваш ҫӗрне.
Вӑл — кипке те ман, сӑпка та,
Ӑна манмӑп ӗмӗрне.
Хумханать-и аслӑ Атӑл,
Каш кашлать-и сӗм вӑрман —
Савнӑ ҫӗрӗм-шывӑм ман вӑл,
Сас парать мӗн авалтан.

4) Ҫӑл чаватпӑр, шыв шыратпӑр.
Кунӗ шӑрӑх, тарӑхатпӑр.
Тепӗр сий илсессӗнех
Ҫӑл тапса тухас пекех.

*Вариантсем:* **А. Галкин, П. Афанасьев, Г. Юмарт, П. Хусанкай.**

**ТУПМАЛЛИ — СОДЕРЖАНИЕ**

Халăх сăмахлăхĕ — Устное народное творчество …………………….
Пĕлĕве сутăн илеймĕн — Знание за деньги не купишь ………………..
Кĕрхи çанталăкăн кăмăлĕ хуçăк — Осень – погоды перемен восемь …
Çут çанталăк – пирĕн тăван кил — Природа – наш дом ………………
Усал ĕçпе ырă ят илеймĕн — Без добрых дел не будет и доброго имени...
Ĕç çынна илем кÿрет — Труд красит человека ……………………………
Ăçта кăна ан çит, тăван çĕр-шыва асра тыт — Много стран прошёл, а добро лишь на родине нашёл ………………………………………………………
Кашни кайăк хăй йăвине сават — Всякий кулик своё болото хвалит ….
Çăкăртан асли çук — Хлеб – всему голова ………………………………..
Çынпа çын туслă пултăр, халăхпа халăх туслă пултăр — Пусть человек с человеком дружит, а народ – с народом ………………………………..
Кам çĕр-шыва юратать, вăл тăшмана кураймасть — Кто любит Родину, тот ненавидит врагов ……………………………………………………………
Вĕреннине пĕтĕмлетни ……………………………………………………